Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУНЬ 5 ВЫРСАРНИКУН 127 (4940) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Кĕтнĕ ĕмĕт çитрĕ

Чаплă та илемлĕ, савăнăçлă тапхăрта пурăнатпăр епĕр. Социалисăм строительствин кашни кунĕ çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем кÿрет. Майăн 25-мĕшĕ—чăваш халăх историне ĕмĕр манми кун пулса кĕчĕ. Çак кун чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ килĕшÿ пани çинчен хыпар илчĕ. Ĕнерхи кун чăваш халăх историне социалисăм строительствинче тепĕр паллă çĕнтерÿ тунă кун пулса кĕрет. Çак кун чăваш халăхĕн тахçантан кĕтнĕ ĕмĕчĕ çитрĕ—Канашран Шупашкара чукунçул трасси тăрăх рельçăсем хывса çитерчĕç. Малашне Чăваш республикĕн тĕп хули Совет Союзĕнчи пĕтĕм хуласемпе чукунçулпа çыхăнать. Чукунçул халăх хуçалăхĕнче мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен чарăнса тăма та кирлĕ мар, вăл пуриншĕн те паллă.

Шупашкар чукунçулпа çыхăнни—Шупашкара чукунçулпа шывçул транспăрт узелĕ туса хурать. Çакă вара вăл Шупашкара Чăваш республикĕн промышлĕннăç центăрĕ тума кирлĕ условисенчен пĕри пулать. Шупашкар промышлĕннăç центăрĕ пулни пĕтĕм республика сăн-сăпатне улăштарать. Çакăн çинчен чукунçул тунипе пĕрлех Шупашкарта пысăк савăтсем лартма пуçлани пит лайăх калать.

Пирĕн çĕршывра кирек мĕнле ĕçе те техникăна çĕнсе илнĕ, большевисăма сĕнсе илнĕ кадрсем татса параççĕ. Паллах, çакăн пек кадрсем вĕсем хăйсем тĕллĕн пулмаççĕ. Вĕсене нумай вăхăт хушши вĕрентсе хатĕрлес пулать. Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçул строительстви çакăн пек кадрсем хатĕрлекен пысăк шкулсенчен пĕри пулчĕ те ĕнтĕ.

Чăваш çĕршывĕ урлă революциччен Мускав—Хусан чукунçулĕ каçса кайнă. Анчах вăл çул чăваш халăхĕшĕн савăнăç пулма пултарайман. Унта чăвашсем ĕçленĕ пулсан та, ирĕксĕр, куççуль йухтарса ĕçленĕ. Вĕсенчен мăшкăланă, тăрăхланă, кулнă. Чукунçулне туса пĕтерсен те чăвашран чукунçул çинче ĕçлеме йулакансем питех те сайра пулнă.

Канаш—Шупашкар чукунçулне пĕтĕм халăх турĕ. Вăл çак çула тума пĕтĕм кăмăлне, пултарулăхне парса ĕçлерĕ. Пăхăр ха есĕр çак çула тăвакан çынсем çине! Мĕн чухлĕ савăнăç, мухтавлăх, чаплăлăх йăлтăртатать вĕсен сăн-пичĕ çинче. Мĕн строительствă пуçланнăран вара çул маçтăрĕ Козлов патĕнче икĕ чăваш хĕрĕ ĕçлеççĕ. Пĕри Рубцова Христинийă Порфирьевна, тепри—Васильева Пелагея Васильевна. Вĕсем иккĕш те комсомолка. Иккĕш те чукунçул строительствине комсомол мобилизацийĕпе пынă. Партак хăвăрăç, именекен хĕрсем пулнă вĕсем строительствăна пырасчен. Малтанах вĕсемшĕн хĕн йывăр пулнă. Парахса кайас шухăш та пулнă. Халĕ вĕсем строительствăри чи хисеплĕ работницăсем-стахановкăсем. Вĕсем рельçасене болтсемпе çкреплетекен астасем. Кулленхи нормăна 160 процент таран тултарса пыраççĕ. Мĕн пек йуратса аша кăмалпа калаçаççĕ вĕсем пирĕн чукунçул, епĕр тăвакан, хамăр вальдги тăвакан чукунçул çинчен! Çавăнпа та вĕсене пĕтĕм рабочисем хисеп тăваççĕ. Нихăçан прогул туман, нихăçан ĕçрен пăрăнма пăхни пулман. Ĕçрен пăрăнакан çын мар вĕсем. Пĕринче Рубцовă йулташăн алли пăсалнă. Вăл çаплах ĕçе пăрахман, çулмаçтăрĕн ăна вăйпа врач патне йама тивнĕ. Акă мĕнле хĕрсем вĕсем Христинипа Плаки! Акă мĕнле çынсем ÿстерсе çитĕнтерчĕ пирĕн строительствă! Акă мĕншĕн чăваш халăхĕ çак çулшăн Сталин йулташа тата унăн чи çывăх соратникне—Çулйĕр Халăх Комиссарне—Каганович йулташа чĕререн тав тăвать.

Чукунçул хывни пĕтĕм чăваш халăхне савăнтарать. Çак савăнăçа вĕсем хăйсем чукунçул строительствине активлăн хутшăнса ĕçленипе кăтартаççĕ, çак савăнăçа вĕсем ытти майсемпе те кăтартма тăрăшаççĕ. Чукунçул строителĕсем уйрăмах Трак, Ишлей тăрăхĕнчи колхозниксене ăшă кăмăлпа асăнаççĕ. Ишлей районĕнчи Мишер промертел колхозникĕсем куччеиĕçпе хирĕç пулса илнине вĕсем нихăçан та манас çук.

Рельçăсем хывса çитернипе чукунçул строительстви ĕçĕ пĕтмест-ха. Халĕ строительствăра чи хĕрÿлĕ ĕç пымала. Çул тăршĕпе хăйăр сарса тухмала, граждански сооруженисем тумала, станцă çуртĕсене тумала. Çак ĕçсене пурне те партипе правительствă кăтартса панă сруксенче. кăçалхи çура, туса пĕтермеле. Анчах строительствă ĕçĕсен хăвăртлăхĕ партипе правительствă, халăх ыйтнипе тан пыраймасть-ха. Рельçă ене хывса пĕтернĕ, Шупашкарта вокзал тума та тытăнман.

Партипе правительствă строительствă тытăмĕн ĕçне çăмăллатас тесе Шупашкар вокзалне тăвас ĕçе Чăвашстройтреста панчĕç. Стройтрестăн хăй çине мĕн пек хисеплĕ те ответлă ĕç шанса хунине ăнлавма вăхăт пек ĕнтĕ. Анчах ĕçе хăвăртрах тытăнас вырăнне строительствă тытăмĕ умне вырăнсăр условисем лартса ответлăха хăй çинчен сирсе йама тăрăшать. Е е инженерсем паратăп, есĕр рабочисем парăр пире, вара вокзал пулать сире тесе лараççĕ. Çак сиенлĕ шухăша пăрахса стройтрест руководителĕсен ĕçе васкавлăн тытăнмала.

Районсем те строительствăна Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăтартса панă хисеп таран ĕç вăйĕ памаççĕ-ха. Мĕне килĕшÿлĕ ĕç вăл Куславккапа Сентĕрвăрри районĕсем строительствăна ĕç вăйĕ ямасăр тăни? Строительствăна куллен 3000 çын кирлĕ. Паянхи куна çак хисепĕн çурри те çук, пурĕ те 1327 çын анчах ĕçлеççĕ. Районсенчи партипе совет руководителĕсен строительствине ĕç вăйĕ парас йĕнепе халех кирлĕ майсем йышăнмалла.

Шупашкарта трасса тăрăх рельçăсем хывса çитерни пĕтĕм халăх савăнăçĕ. Чукунçула пĕтĕмпех туса пĕтерсе хута ярсан çак савăнăç тата та ÿсĕ. Çавăнпа та строительсен задачĕ вăл—Канаш—Шупашкар чукунçулне вăхăтра туса çитерсе хута йамала тăвасси пулать. Ку ĕçре строительсене пĕтĕм партипе совет организацисен вирлĕн пулăшса тăмала.

Верховнăй Советсене депутата суйлама палăртнă кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулни

Çĕршывра пур çĕрте те нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ, вĕсенче суйлавçăсем хăйсен кандидачĕсемпе тĕл пулаççĕ. Ийунĕн 2-мĕшĕнче Мускаври Дорогомиловски суйлав округĕнчи 100 пин ытла çынсĕнчи суйлав умĕнхи митинга пухăннă. Митинга РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат инженер-орденоносецĕ Д. А. Тимофейев сăмах тухса каланă.

Сормăвăра (Горький облаçĕ) Сормовски районĕнчи ĕçсынисен представителĕсен суйлав умĕнхи районти канашлăвĕ пулса иртнĕ. Сормовичем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă хăйсен кандидатне—„Красное Сормово" савăтри стахановкăна С. П. Йастребăва хĕрÿллĕн саламланипе кĕтсе илнĕ.

Ташкентра Октябрьски тата Сталински районсенчи çамрăк суйлавçăсен суйлав умĕнхи митингĕ пулса иртнĕ, унта 10 пин çын пулнă. Митинга Узбек ССР Республикин Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат комсомолка, студенка—отличницă Гульсара Курбанăвă сăмах тухса каланă. Каракол хулинчи (Киргизи) 98 мĕш номерлĕ суйлав округĕнчи вăккĕмĕш участкăри суйлавçăсем умĕнче Киргиз СС Республикин Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат, Н-ски погранхрăнчи часăн командир А. В. Новиков йулташ тухса каланă. Покровка—Роменская йăленчи колхозникĕсем-суйлавçăсем—600 çын хăйсен Украина СС Республикин Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа, Луначарский йачĕллĕ тăракан колхоз председательне Йелена Ивановнă Кивăпа тĕл пулнă.

Амур—Нижне-Днепровски йал суйлав округĕнчи ĕçсынисен митингĕнче, унта 5 пин çын пулнă, Украина СС Республикин Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Карл Либкнехт йачĕпе тăракан металлурги савăтĕнчи маçтăр С. Т. Зарубин сăмах тухса каланă.

Кобулетре (Грузи) Ворошиловски суйлав округĕнчи суйлавçăсем Аджари АСС Республикин Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа колхозницă Мамуч—Оглы Мемедăвнă Султанă йултăшпа тĕл пулнă.

(ТАСС).

Мускав тата Ленинград хулисенчи партконференцисем хупăннă

Ийунĕн 3-мĕшĕнче Мускавпа Ленинград хулисенчи партконференцисем хăйсен ĕçĕсене пĕтерне.

Йулашки ларура Мускав хулинчи партконференци ПСК(б)П Мускав Хула комитечĕн ĕçĕсем çинчен А. И. Угарăв йулташ тунă отчотла доклад тăрах хатĕрленĕ резолюцине сÿтсе-йавса, ăна пурте пĕр шухăшлă пулнипе йышăннă.

Вăрттăн сасăласа ПСК(б)П Мускав Хула Комитечĕн пленумне 65 члентан тата 20 кандидатран суйласа хăварнă.

ПСК(б)П Мускав Хула Комитечĕн членĕсен шутĕнче—Угарăв, Маленков, Булганин, Фриновский, Сидăрăв, Цесарский, Папанин, Байдуков йулташсем, Трехгорнăй мануфактура хапрăкĕнчи работницă-стахановкă Масленникăвă йулташ, Пичугинă, Кабанăвă, Огнĕв йулташсем тата ыт. те.

Калама çук пысăк хавасланхпа конференци Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

* * *

Ленинград хулинчи партконференцийĕн йулашки ларăвĕнче ПСК(б)П Ленинград хула комитечĕн составне вăрттăн сасăласа суйлани результачĕсене вуласа панă. ПСК(б)П Ленинград хула комитечĕн составне 65 членан тата 20 кандидатран суйласа хăварнă.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн тата Ленинград комитечĕн çекретарне А. А. Жданăв йулташа хула комитечĕн составне пурте пĕр шухăшлăн пулнипе суйлани çинчен пĕлтернине конференци çав тери пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ.

Тăвăллан оваци туса конференци Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

Йулашкинчен Жданăв йулташ уçăмлă сăмах каланă, ăна нумайччен алă çупнипе кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

Трактăриссен канашлăвĕ

Ийунĕн 3-мĕшĕнче ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче трактăриссен канашлăвĕ уçăлнă. Канашлура машина-тракторлă паркăн ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен, хирсенче трактăрпа ĕçлемелли ĕç нормисене тăвасси çинчен, çавăн пекех тата хальхи вăхăтра трактăриссене тÿлемелли çиçтемăна çĕнĕрен пăхса тухас и çинчен тăракан ыйтусене сÿтсе-йаваççĕ.

Çав ыйтусене сÿтсе-йавнă çĕрте трактăриссем, трактăр бригадисен бригадирĕсем, МТС директăрĕсемпе МТС-нчи аслă агрономсем тата республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Кимиссариачĕсен работникĕсем, крайсен и тата облаçсенчи çĕрĕç пайĕсен работникĕсем хутшăнса ĕçлеççĕ.

(ТАСС).

Украина СС Республикинчи Донецк облаçне Сталинск тата Ворошиловград облаçĕсене уйăрни

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе Украина ССР Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Украина СС Республикинчи Донецк облаçне Сталинск тата Ворошиловград облаçĕсене уйăрасси çинчен йышăннă постановленине çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Италире авланман çынсемпе урçасене ĕçрен кăларса йараççĕ

РИМ, ийунĕн 2-мĕш (ТАСС). Итали пичетĕнче правительствă декретне пичетлесе кăларнă, унта çапла каласа çырнă: „Хула пуçлăхĕсен, депутатсен, вырăнти тытăм учрежденисенче ĕçлекен служăщисен; çавăн пекех тата пуçламĕшпе вăтам шкулсенчи учителсен пурин те, вĕсем авланман пулсан, çитес икĕ уйăх хушшинче хăйсен ĕçĕсенчен тухса каймала". Çав декрет урçасене те тивет.

Фашисла Итали руководителĕсем авланакансемпе каччă тухакансен тата çуралакансен хисепне çавнашкал „декретсем" кăларнипе ÿстересшĕн пулмала, мĕншĕн тесен йулашки вăхăтра çĕнĕрен çуралакансен хисепĕ унта çав тери хытăн чакса пырать.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра ийунĕн 1-мĕшĕнче пăлхавçăсен çарĕсем, артилери пулăшса пынипе, Побла де Сегур патĕнче (Сорт районĕ) республиканецсен позицийĕсем çине атакалана. Икĕ сехет хушши вăрçнă хыççăн, пăлхавçăсене йăлтах кайала хăваласа йанă. Пăлхавçăсен пысăк çухатусем пулнă.

Леванта çектăрĕнче пăлхавçăсем тĕрлĕ районсенче атакăсем туса пыраççĕ. Калама çук хăйăр çапăçусем пулса пыраççĕ.

Сывлăшри çапăçура республиканецсем фашиссен 12 самольотне персе антарнă, хăйсен пилĕк самольот пĕтнĕ. Республикăн тăвата льотчикĕ аманнă, пилĕккĕмĕшĕ—аманман.

Кăнтăрти фронтра, Поркун районĕнче (Хаенрен çурçĕрпе хĕвеланăçнеле) республика çарĕсем икĕ километр малалла кайнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

Гранольерс çине (Барçелонăран çурçĕрпе хĕвеланăç йенеле) бомбасем пăрахнă чухне, фашиссен самольочĕ, иасар тĕлĕнче айалала анса, лавкасем умĕнче çимĕççем илме черетре тăракан хĕрарăмсем çине бомбă пăрахса, 57 хĕрарăма вĕлернĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Хенань провинцин Çурçĕрпе Хĕвелтухăç пайĕнче (Çурçĕр Китай) Кайфынрен хĕвелтухăç йенне-ли районра, Китай çарĕсем хăйсем çаварса илнĕ Йапонин 14-мĕш дивизине хирĕç активлăн вăрçаççĕ. Китай çарĕсем çав дивизине пысăк çухатусем кÿнĕ, вăл дивизирен халĕ кăшт çеç тăрса йулнă.

Аньхуей провинцин çурçĕрпе хĕвеланăç пайĕнче Йапони çарĕсем Босиьнь йатлă хула çине çĕнĕрен наступлени тума пуçланă. Йулашки хыпарсем тăрăх, Китай çарĕсем вăл хуларан тухса кайнă.

Вăтам Китайри фронтсенчи ĕçсем çинчен сведенисем çук.

* *

Çурçĕр Китайра, Хенань провинцин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче, йапонецсем Кайфын çине наступлени тăвассине вайлатаççĕ. Ийунĕн 1-мĕшĕнче вĕсем Суйçаньа тытса илнĕ.

Йапони çарĕсем тата Аньхуей провинцин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче наступлени тăваççĕ. Йапони çарĕн ушканĕ артиллери вăйлăн персе тăнипе Ляньфын районĕнче Китай çарĕсем çавăрса илнĕ Йапонин 14-мĕш дивизине пулăшу пама Хуанхе йуханшывĕ урлă каçнă.

Шаньси провинцинче Китай çарĕсем йапонецсене халĕ те хĕсеççĕ. Вăл провинцин кăнтăр пайĕнче йулашки икĕ ерне хушшинче Китай çарĕсем йапонецсене вунă хуларан хăваласа кăларнă.

(ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Германи правительстви Дрезденре тата ытти вырăнсенче те çĕнĕрен çар разрйачĕсене мобилизацилеĕ. Çакăн пирки, йут çĕршывсенчи пичет паллă тунă тăрăх, Чехословаки чиккинчи лару-тăру чылайах начарланнă.

(ТАСС).

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин конференцийĕ

Ийунĕн 3-мĕшĕнче кунĕпех ПСК(б)П хула комитечĕн отчочĕ тăрăх прени пычĕ. Пренире тухса калакансем çĕнĕ строительствă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен ыталарах чарăнса тăчĕç. Кăçалхи пек пысăк строительствă республикăра та, Шупашкар хулинче те пулман. Анчах çĕнĕ строительствă ĕçĕ питĕ йĕрипен пырать. Çакна хытă критиклеççĕ тухса калакансем.

— ПСК(б)П хула комитечĕ Шупашкарти çĕнĕ строительствă ĕçĕ мĕнле пынине пăхса тухса, таткала решени йышăйчĕ. Ку решенире кашни организацин строительствă ĕçне хăш срукра туса пĕтермелине кăтартса панă. Самахран, Чăвашторг магазинне м йăн 15-мĕшне, 12 хватерлĕ çурта ийунĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле пулнă. Анчах стройтрестпа хуçалăх организацисем ку çуртсене кăтартнă срукра туса пĕтермен. Куй пек ответсăрлăха чăтма çук,—тет Лапин йулташ.

Малала Лапин йулташ çуртйĕр фончĕ çинчен чарăнса тăрать. Хуçалăх организацисем çурт-йĕрсене пĕрперинчен суйăн илсе хватер ыйтăвне татасшăн, çурт-йĕрсене хăйсем тума шутламаççĕ. Хула совечĕн хуçалăх организацисене пĕрперинчен çурт-йĕр илме чармала. Вĕсене хăйсене çурт-йĕрсем тутармала.

Матвейев йулташ строительствă ĕçĕнче тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕç питĕ йĕрипен пыни çинчен калать. Стройтрест пуçлăхĕ Ворнăчов, Капин йулташсем хăйсен начар ĕçĕсене йукçа çук, материал çук тесе витсе хăварма пăхаççĕ. Паянхи куна укçа та, материал та çитĕлĕклĕ. Анчах Ворнăчов йулташ строительствă ĕçне организацилемест. Шыв пăркипе цемент, тимĕр тавраш çитмест, тесе ĕçе тытăнмасăр тăраççĕ. Шыв пăрки тăвас ĕçре çĕрĕçĕ нимай, ăна тума шутламаççĕ. Советсен çуртне, шкула тума кирлĕ таранах укçа та, материал та панă. Ĕç çавах каймасть. Рабочисем çитмеççĕ. Ку ĕçе организацилеме тăрăшмаççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чукунçул станцине тăвассине стройтрест çине хунă. Ку станцăна тăвас тĕлешпе Ворнăчов нимĕн те тумасть. Ун шучĕпе чукунçул тăрăх малтан кирпĕч, стройматериал тата ытти илсе килмеле, вара тин ку ĕçе тытăнмала.

880 вырăнлă шкула тăвас ĕç те питĕ йавăх пырать. Çутĕç Халăх Комиссарĕ Осипăв йулташ ку шкулпа интересленмест. Вăл: епĕ хулари строительствăшăн ответ тытма пултараймастăп, манăн йалти шкул строительствине йĕртсе пымала, тесе шутлать. Ку пĕртте терĕс мар. Ку шкула вăхăтра ĕçе йамала, çавăнпа ăна туна çĕрте икĕ çменăпа ĕçлемеле.

Абрамав йулташ електростанцине сăтăрла туни çинчен чаранса тарать. Електростанцине тунă чухне Шупашкар хули ÿссе пырассине шута илмен. Ку таранччен електростанци 900 киловатт çеç пана. Халĕ станци ĕçне лайăхлатма татăкла мерăсем йышăнатпăр. Станци 1400 киловатт пама тытăнать. Анчах ку каллех çителĕксĕр. Ийунĕн 26-мĕшĕ тĕлне тата икĕ агрегата ĕçе йама шутлатпăр, тет Абрамав йулташ. Трансформатăр будкисене сăтăрла, йăвăçран тунă. Вĕсене кирпĕчрен тумала.

Строительствă ĕçне хытă критиклене хыççăн, Ворнăчов йулташăн ответ тытма тивре. Анчах вăл хăйĕн самахĕнче строительствăн начар ĕçне тĕрлĕ сăлтавсемпе витсе хăварма пăхрĕ. Хăйĕн йăнăшĕсене палăртмарĕ. Ун шучĕпе строительствă ĕçе начар пыни проектсем, çметăсем, укçа-тенке, стройматериал, ĕçлекенсем çитĕлексерринчен килеççĕ.

— Перремĕш квартăлта ĕç пулман пирки рабочисене ĕçрен хăтартăмăр Халĕ рабочисем çук. Епĕр çемйĕлĕ рабочисене ĕçе илме пултараймастпăр, хватерсем çук, печчен çынсене çеç ĕçе илетпĕр. Ку печчен çынсемпе капиталлă строительствă ĕçне тума май çук,—тет Ворнăчов йулташ. Çапла вара Ворнăчов шучĕпе строительствă ĕçне вĕçĕх йĕркелеме май çук. Çавăнпа та вăл шкула хăçан туса пĕтерен?—тесе ыйтсан: „Çентябрĕн 1-мĕшне пулмасть", тесе ответлеме те вăтанмарĕ.

Павлав (Чăвашвăрманпром) йулташ вăрман хуçалăхĕ çинчен каларĕ:—тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕç нимрен ытла вăрман хуçалăхĕнче начар пырать. Меншĕн тесен, кунта сăтăрла ĕçсен меслетне ăнланса çитеймен. Иртнĕ çулта рабочисен пахчисене, çирнсене турса илнĕ хыççăн, рабочисем саланса пĕтнĕ.

— Шăмăршă вăрманпромхозĕнче шкул, пекарня, рабочисем те вутсăр лараççĕ. Ку кулăшла мар-и?—реплика парать Парти Обкомĕн çекретарĕ Иванов йулташ.

Типографинчи парторг Климентăв йулташ хула комитечĕ предприйатисемпе çитĕлексĕр йĕртсе пыни çинчен чарăнса тăрать. Хула комитечĕн представителĕ типографинче отчот турĕ. Типографи мĕнле ĕçлени çинчен калама сăмах тупаймарĕ. Хула комитечĕн типографине пулăшни кирлĕ. Халăх тăшманĕсем типографи çумĕнчи ФЗУ шкулне пĕтерсе лартнă, халĕ рабочисем çитмеççĕ.

— Суйлав литературисене суйлав кунĕ патне çитсен тин пичетлеме тытăнаççĕ, малтан хатĕрлемеççĕ. Иртнĕ суйлавра Вышинский йулташăн „Ыйтусемпе ответсем" кĕнекине декабрĕн 10-мĕшĕнче, мĕнле сасăламали çинчен çырнă плаката декабрĕн 5-мĕшĕнче тин çапса кăларнипе ку литературăсем ахалех выртнă, вĕсене вырăна çитермен. Учебниксене пичетлес ĕç те питĕ йавăх пырать. Çентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне букварь та пулмасть. Марксисăмпа ленинисăм литературисене пичетлесси те питĕ йĕрипен пырать. 1938 çулта 100 бр шÿрă пичетлемеле, халĕ 18 брошÿрă çеç пичетленĕ, тет Хрусталев йулташ.

Чăваш Тĕпĕçтăвком председателĕ Андрейĕвă йулташ ача çуратмали çуртри сăтăрла ĕçсем çинче чарăнса тăчĕ. Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕ тата унăн парторгĕ кутаранченех институтри сăтăрăс не витсе пураннаççĕ. Прокуратура ку ĕçе тăсса пырать.

Малала Андрейĕвă йулташ суйлав кунне хатĕрленесси çинчен чаран ă тăрать. Хула комитечĕ агитаторсене кирлĕ пек йĕртсе пымасть. Çавăнпа та агитаци ĕçнĕ участкăри суйлав комиççи председателĕсем хăйсем туса пыраççĕ. Çтена хаçачĕсенче те вĕсемех кандидатсемшĕн агитацилеççĕ. Агитаци ĕçне суйлав комиççи председателĕсем çине хуни тĕрĕс мар. Андрейĕвă йулташ Спасăв йулташăн йăнăшĕсене те критиклерĕ.

Судаков йулташ парти вĕрентĕвĕ, шкул ĕçĕсем çинчен калать. Хула комитечĕ семинарсене йĕркелĕ иртермест. Учрежденин руководителĕсем пропагандис пулса ĕçлемеççĕ. Мускавра кашни учрежденин руководителĕ пропагандис. Пирĕн те çавăн пек тумала.

Судаков йулташ книготорг ĕçĕнчи çитменлăхсене критиклерĕ. Книготоргра халĕхи вăхăтра 42 тĕслĕ учебниксем складра выртаççĕ. Книготорг пуçлăхĕсем ку учебниксене август уйăхĕнче тин сутма тытăнма шутлаççĕ.

Полтев йулташ çĕнĕ кадрсене ĕçре пулăшса, вĕрентсе пырасси, парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелли çинчен чарăнса тăчĕ. Вăл çулйĕр строительствинче тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçленине критиклерĕ. Çавăн пекех, вăл Спасăв йулташ çитменлĕхĕсене палăртрĕ.

— Спасăв йулташ начар ĕçлемест, анчах вăл самокритикăна йуратмасть.

Хула комитечĕн отчочĕ тăрăх прениĕре тухса калама 89 çын çырăннă, ку таранччен 46 çын тухса каланă.

Германире тата Австрире массăлă арĕссем

Чехословаки хаçачĕсем Берлин тата Венă хулисенче çĕнĕрен массăлă арĕссем тунă çинчен пĕлтереççĕ. Ийунĕн 1-мĕшĕнче çĕрле Берлинра 900 çынна ытла арĕсленĕ, вĕсене Гитлера хирĕç пропагандă тунă тесе айăпланă. Çав каçах Венăра 600 çынна йахăн, пуринчен ытла Австрири штурмовиксемпе национал-социалиссене, арĕсленĕ. Охранă отрйачĕсем тĕрмисемпе казармисем йăлтах арĕсленĕ çынсемпе тулса ларнă. Арĕсленисенчен хăшпĕрисене васкасах Германин вăта варрине концентрацилĕ лагĕрсене куçараççĕ.

(ТАСС).

Орденлă Чăваш республикĕ хăйĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем

Гурий Херсонăв

Гурий Алексейĕвич Херсонăв йултăш Ишлей районĕнчи Кшавăш йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Вăл пĕчĕклех ашшĕ-çер, тăлăха тăрса йулнă. Гурий Алексейĕвич çамрăклах хăй вăйĕпе тăранса пурăнма пуçланă.

1923 çулта Херсонăв йултăш хăйсен йалĕнче Кшавăшра йултăшĕсемпе пĕрле комсомол йачейкки организациленĕ те 3 çул хушши йачейка çекретарĕ пулса ĕçленĕ.

1926—1928 çулсенче Херсонăв йултăш Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар ретĕнче службăра. Вăл полк шкулĕнчен вĕренсе тухса кĕçĕн командир пулнă, вĕренӳ пунктинче взвод командирĕн ĕçĕсене те туса пынă. Унта ăна вĕрентӳ ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн, тăрăшса ĕçленĕшĕн çар округĕнчен хисеплĕ грамăтă панă.

Хĕрлĕ Çартан таврăнсан Херсонăв йултăша йалсовет председательне суйласа лартнă. Кунта вăл пĕр çулталăк хушши ĕçленĕ, унтан ăна Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз председательне суйланă. Çапла Херсонăв йултăш комсомол ĕçĕнче, Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулса, йалсовет тата колхоз председателĕнче, пропагандисра ĕçлесе большевикла работник пулса çитнĕ.

Гурий Алексейĕвич Херсонăв йултăш 1930 çултанпа ПСК(б)П ретĕнче тăрать. 1937 çулхи ийуль уйăхĕнче ăна ПСК(б)П Ишлей райкомĕн пропагандисĕ пулса ĕçлеме илнĕ. 1938 çулхи йанвар уйăхĕнчен пуçласа Ишлей районĕнчи райĕçтăвкомĕн председателĕн ĕçĕсене туса пыракан пулса ĕçлет.

Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Гурий Алексейĕвич Херсонăв йултăша Ишек суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

Тивĕçлĕ кандидат!

Ĕçре ӳснĕ большевик

Димитрий Йакăвлĕвич Миткеов Елĕк районĕнчи Мучикасси йалĕнче, ватам хресчен хуçалăхĕнче 1899 çулта çуралнă. Пуçламăш шкулта вĕреннĕ хыççăн, вăл 1919 çулччен хуçалăхĕнче ĕçленĕ.

1919 çултан пуçласа 1922 çула çитиччен Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче пулнă. Хĕрлĕ Çар ретĕнчен таврăннă хыççăн, вăл общĕствăла ĕçсенче хĕрӳллĕн ĕçлеме тытăнать. 1923—1925 çулсенче Елĕк вулăсĕнчи кресткомăн членĕ тата çекретарĕ пулса ĕçленĕ. 1925—1926 çулсенче Елĕк вулăçтăвкомĕн культурăпа çутта кăларас ĕçсен заведуйушчийĕ пулса ĕçленĕ. 1926 тата 1927 çулсенче Елĕк вулăçтăвкомĕн председателĕ. Малашнехи çулсенче вăл çавăн пекех ответлă вырăнсенче ĕçлесе пырать. 1930 çултан пуçласа Елĕк райĕçтăвкомĕн председателĕ пулса ĕçленĕ.

Д. Й. Миткеов йултăш Пĕтĕм Сойузри Коммунисçен (большевиксен) Парти членĕ. Ленинпа Сталин партийĕ ăна пĕлӳ илме, культурăна пур йенĕпе те çĕнсе илме çул уçса парать, 1931 çулта парти ăна Ленинградри Сталин йачĕпе тăракан Пĕтĕм Сойузри Коммунисла Йалхуçалăх Университетне вĕренме панă.

1934 çулта Миткеов йултăш Университетран вĕренсе тухать. Кун хыççăн вăл пысăк хисеплĕ ĕçре, МТС директорĕнче ĕçлет. Малтан Елĕкри тата кайарахпа Йĕпреçри МТС директорĕ пулса ĕçленĕ. Миткеов йултăш пысăк социалисăмла хуçалăха йĕртсе пырас ĕçри хăйĕн пултарулăхне кăтартса пачĕ. Хăйĕн ĕçне йуратса туса пынă, колхозсемпе пĕлсе йĕртсе пынă, колхозсенчи йĕртсе пыракан кадр çине тимлĕн пăхнă. Вăл кăтартулăн йĕртсе пынипе Йĕпреçри МТСтанцийĕ йулашки икĕ çул хушшинче республикăри малти вырăнта тăнă. Елĕкри МТСтанцийĕ 1935 çулта плана 108 процент тата Йĕпреçри МТСтанцийĕ 1936 çулта—148 процент 1937 çулта—131 процент тултарнă. Социалисăмла шултра хуçалăха çакăн пек йĕртсе пынă Миткеов йултăш.

1938 çулхи март уйăхĕнче партипе правительстăвă Миткеов йултăша тата та пысăк ĕçе, ССР Сойузĕн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикĕнчи Уполномочăннăйне лартнă.

Д. Й. Миткеов йултăш социалисăм строительстăвинче активлăн ĕçлесе ӳснĕ большевик.

Ăна колхоз стройĕ çитĕнтерне

Колхоз стройĕ колхозниксем хушшинчĕн Ленин—Сталин партине чĕререн парăннă, колхозниксен пурнăçне пуйан та культурлă тăвассишĕн мĕн пур вăй-халпа кӳлĕнсе ĕçлекен çынсене сахал мар çитĕнтерчĕ. Çавăн пек çынсенчен пĕри—вăл Урхас Кушкăри „Çăлтăр" колхоз председателĕ Çтепан Йакăвлевич Йакăвлĕв.

Çтепан Йакăвлĕвич 1908 çулта Урхас Кушкăри (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Вĕсен çемйи колхоза 1931 çулта кĕнĕ. Çав çулах Йакăвлĕв йултăша бригадира уйăраççĕ. Бригадирта ĕçлесе вăл хăйĕн пултарулăхне—колхозниксем хушшинче ĕçлеме, хуçалăх ĕçне йĕркелеме пĕлнине аван кăтартрĕ.

Унăн пултарулă ĕçне кура, ăна колхоз председательне уйăраççĕ.

„Çăлтăр" колхоз, çултан çул хыттăн ӳссе пычĕ. Халĕхи вăхăтра вĕсен йалĕнчи хресчен хуçалăхĕсенчен 98 процент колхозра тăраççĕ.

Колхозăн тырпул тупăшĕ çултан çул ӳснĕ. 1936 çулта „Çăлтăр" колхоз тĕштырăсене гектартан вăтам шутпа 6,35 центнĕр, 1937 çулта—15,58 центнĕр туса илнĕ. Ӳсĕм икĕ хут ытла. Йакăвлĕв йултăш тăрăшнипе, 1937 çулта колхоз тĕш тырăсене пĕтĕмĕшпех суртлă вăрлăхсемпе акса хăварчĕ. Йаровизациленĕ вăрлăхпа 30 гектар акнă. Çапла ĕçлесе вĕсем гектартан ыраш 15,8 центнĕр, тулă—15,52, урпа—19, сĕлĕ — 21 центнĕр туса илме пултарнă.

„Çăлтăр" колхоз вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе М. И. Калинин йачĕпе тăракан колхозпа (Кӳславкка р.) ăмăртать. „Çăлтăр" колхоз колхозникĕсем 1938 çулта гектартан тĕштырă 130 пăтран кайа мар илмеле,—тесе хăйсем çине ответлă задача лартнă.

Пурăнма лайăх! Пурăнма хавас. Ун пирки Сталин йултăш Пĕтĕм Сойузри стахановецсен пĕрремĕш канашлăвĕнче пит те хумханмала каланăччĕ. Çак сăмахсем тĕрĕссине епĕр пур çĕрте те туйатпăр. Йакăвлĕв йултăш йĕртсĕ пыракан колхоз колхозникĕсен пурнăçĕнче те епĕр ăна пит аван куратпăр. „Çăлтăр" колхоз колхозникĕсем 1937 çулта ĕçкунĕ пуçне 9 килограм тĕштырă илнĕ. Пуйан та культурăлă пурăнма пуçлаççĕ вĕсем. Колхоз пысăк клуб туса лартрĕ. Вăл колхозри культурăлă-массăлă ĕçсен центрĕ пулса тăрать.

Колхозăн çак чаплă çитĕнӳсем—Ленин—Сталин партийĕ йĕртсе пынипе колхозниксем çĕнĕ пурнăçшăн большевикла кĕрешсе илнĕ çĕнтерӳсем. Çав çĕнтерӳсене тăвас ĕçре Йакăвлĕв йултăш хисеплĕ, тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултарчĕ.

Çакна хисепе илсе, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Çăлтăр" тата „Социалисăм" колхоз колхозникĕсем Йакăвлĕв йултăша Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Йакăвлĕв кандидатурине Шуршăл суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Йакăвлĕв—депутата суйлама тивĕçлĕ кандидат.

Пелагейă Меценатăвă

Пелагейă Сергеевнă Меценатăвă йултăш ПСК(б)П Елĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçлет. Вăл Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн çунса ĕçлекен хастар хĕрарăм.

Пелагейă Сергеевнă 1903 çулта, Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăк йалĕнче, ватам хресчен çемйинче çуралнă. Йалти шкултан 1916 çулта вĕренсе тухнă. 1927 çулччен килтех, хăйсен хуçалăхĕнче ĕçленĕ.

Пелагейă Меценатăвă йултăшăн çамрăк кун-çулĕсем чаплă ĕмĕрте совет саманинче иртнĕ. Социалисăм çĕршывĕ—пирĕн тăван çĕршыв—ăна аслă та çутă çул уçса пачĕ.

Вăл 1927—29 çулсенче—икĕ çул хушши лавкара продавщицă пулса ĕçлет. Ĕçлеме вăл йуратать те пултарать. Çак ĕçре вăл хăйĕн хастарлăхне, пултарулăхне кăтартрĕ.

1929 çулта Меценатăвă йултăш партие кĕрет. Çав çулăн вĕçнеле ăна ПСК(б)П Çĕрпӳ райкомĕн хĕрарăмсем хушшинче ĕçлекен çектарĕн пуçлăхне пулса ĕçлеме лартаççĕ. 1930 çулта ПСК(б)П Çĕрпӳ райкомĕн членне суйлаççĕ.

1930 çулта Пелагейă Çергеевнă коммунисла аслă шкула вĕренме кĕрет. Большевисăма вĕренес задачăна лартать вăл. Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин произведенийĕсене Меценатăвă йултăш пит тăрăшса вĕренет, çак ĕçе пĕтĕм вăй-хала, пĕтĕм пултарулăха хурать.

Коммунисла аслă шкултан вĕренсе тухсан, вăл ПСК(б)П Елĕк райкомĕнче культурăпа пропаганда пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. 1933 çулти ийуль уйăхĕнчен пуçласа 1937 çулти май уйăхне çитиччен районри хаçат редакторĕ. Унтан Меценатăвă йултăша парти райкомĕн çекретарĕне суйласа лартаççĕ. Çакăн пек ĕнтĕ унăн чаплă ӳсĕм çулĕ.

Меценатăвă йултăша Елĕк районĕнчи ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ, ăна йуратаççĕ, ун çине пысăк шанăç хураççĕ. Çак йуратăва, çак шанăçа вăл çĕнĕ пурнăçшăн большевикла кĕрешнипе, халăха хисепелесе, йуратса ĕçленипе илнĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—Меценатăвă йултăш — лайăх большевиксенчен пĕри, халăхăн хисепе тивĕçлĕ хĕрĕ.

Тимофей Порфирийĕвич Куликов

Тĕпренех улшăнчĕ йалăн сăн-сăпачĕ. „Елĕк йатлă çын вырăнне шутланнă кулак—експлоататăр, ростовщик—пуйсăхан, усламçă—спекулянт, уредниксем çухалчĕç. Халь ĕнтĕ йалти йатлă çынсем—колхозсемпе совхозсенче ĕçлекенсем, шкулсемпе клубсенче ĕçлекенсем, аслă трактăриссемпе комбайнерсем, уйхир ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх бригадирĕсем, колхоз хирĕсенчи ударниксемпе ударницăсем пулса тăраççĕ „(Сталин).

Чăваш республикĕнче çавăн пек паллă çынсенчен пĕри—вăл Тимофей Порфирийĕвич Куликов йултăш. Вăл колхоз ĕçĕнчи пултарулă организатăр, вăйлă тырпул маçтăрĕ—орденоносец.

Тимофей Порфирийĕвич 1905 çулта, Елĕк районĕнчи Хуçек Ушкăн йалĕнче, ватам хресчен çемйинче çуралнă.

Сакăр çулта вăл вĕренме кайнă. Шкулта аван вĕренсе пынă, анчах вĕренсе тухма унăн май пулман. Ашшĕн хуçалăхĕ çунса кайнă хыççăн, унăн пурнăçĕнче йăвăр кун çулĕсем пуçланнă. Вăл кулаксем патне ĕçлеме кайнă, пиллĕк çул хушши кулак пусмăрне тӳссе пурăннă.

1928—31 çулсенче вăл вăрман хатĕрлевĕнче йăвăç турттарнă. 1931 çулта унăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулнă. Вăл çак-çул „Новый путь" колхоза кĕрет. Çак колхозра вăл ӳснĕ, çирĕпленнĕ.

Колхоза кĕрсен, вăл ĕçри пултарулăха малтанхи кунсенчех кăтартма пултарнă. Колхозниксем ăна малтан колхозри ревизи комиссийи председательне суйлаççĕ. Ку ĕçре вăл икĕ çул ĕçлет. Унтан 1932 çулта колхоз председательне суйласа лартаççĕ. Кунта 1937 çулчен ĕçлет.

1935 çулта вăйлă тырпулшăн хастар кĕрешнĕшĕн ăна Мускава йалхуçалăхĕнчи стахановецсен-ударниксен канашлăвне йанă. Партипе правительстăвă уйăн пултарулăхне пысăк награда парса хакланă—Ĕçлĕ хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă.

Куликов йултăш 1937 çулта Шупашкар хулинче колхоз кадрĕсен квалификацине ӳстермели 3 уйăхлăх курсра вĕренсе тухнă. Çак çулах ăна Елĕк райĕçтăвком председателĕн заместителне ĕçлеме лартнă.

Т. П. Куликов йултăш—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă тивĕçлĕ кандидат. Унăн кандидатурине, Елĕк районĕнчи „Доброволец" тата Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем тăратнă, Вутлан суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Григорий Михайлăвич Гуçĕв

Аслă Октябĕр революцийĕччен Григорий Гуçĕвсен çемйи лайăх пурнăçпа пурăнман. Ашшĕ кулаксем патĕнче тара кĕрешсе ĕçленĕ. Гуçĕв йултăш 1904 çулта Тутаркас районĕнчи Йаркейкинă йалĕнчи ватам хресчен çемйинче çуралнă.

Гуçĕв йултăшăн çамрăклăхĕ савăнăçлă пулман. Çамрăклах вăл нумай йăварлăхсемпе хуйха курнă.

1916 çулта Нискассинчи пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă. Унтан 1917 çулта Чикмери 2-мĕш сыпăклă шкула вĕренме кĕнĕ. Анчах килте пурнăç начар пулнипе, Григорин вĕренĕве пăрахмала пулнă.

1923—1924 çулсенче çуркунне вăл Рутка тата Атăл шывĕ çинче сулă йухтарнă çĕрте ĕçлет. Хĕллехи вăхăтра общĕствăла политикăла ĕçсенче, йалсоветĕнче, кооперацинче т. ыт. çĕрте те ĕçлет. 1923 çулта ПСÇЛКС членне кĕрет. Комсомола кĕрсен, йал хушшинче вирлĕн ĕçле пуçлать. Мăн Сĕнтĕрти ПСÇЛКС йачейкин бӳро членĕнче, унтан вулăсри ĕçтăвкан комитетра, Тутаркас райĕçтăвкомĕнчи ПСÇЛКС йачейки бӳро членĕнче ĕçлет.

1925—1927 çулсенче политçут ĕçĕнче пулать. Малтанах хутпĕлменнисене вĕрентес ĕçре ликвидатăр, вулав çурт пуçлăхĕ, унтан вулăçри политçут организатăрĕнче ĕçлет.

Гуçĕв йултăш 1927 çултанпа ПСК(б)Парти членĕ, 1927 çултанпа партипе совет организацисен ответлă ĕçĕсенче.

1927—1931 çулсенче ПСК(б)П Тутаркас райкомĕпе райĕçтăвком членĕ, 1928—1930 çулсенче Тутаркас райçĕрĕç пай пуçлăхĕ пулнă.

Колхозсем организациленĕ çулсенче, Гуçĕв йултăш йединоличниксене колхоза пĕрлештерес тĕлĕшпе тăрăшать. 1929 çулта хăйсен йалĕнче колхоз организацилет. Унăн килĕнчи çемйи çав вăхăтран пах колхозра тăрать.

1930 çулта ăна парти организацийĕ Карăшлăхри колхоз çамрăкĕсен шкулне йĕркелеме йарать. Кĕске хушăрах вăл кунта колхоз çамрăкĕсен шкулне йĕркелесе çитерет.

1931 çулта ПСК(б)П Тутаркас райкомĕнче оргинструктăрсен пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. Çак çултах ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ ăна Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариатне ĕçлеме куçарать. 1932 çулта районри аппаратсене тĕрĕклетес ĕçпе Елĕк районне кайса, райколхозсоюз председателĕ пулса ĕçтет. Çак çулах декабĕр уйăхĕнче каллех ăна Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариатне ĕçлеме куçараççĕ.

Гуçĕв йултăша партипе правительстăвă мĕнле ĕç шанса панă, вăл çав ĕçе тӳррĕн туса пынă. Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрса ĕçленĕ, ĕçленĕ çемĕн ӳссе пынă. Çак паха ĕçсене кура, ăна ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ 1933 çулта Вăрнарти машинă-трактăрлă станцин директăрне ĕçлеме лартнă. Кунта вăл 1938 çулччен ĕçлет.

Гуçĕв йултăш машинă-трактăрлă станцин директăрĕнче ĕçлесе халăх хушшинче пысăк шанчăклăх илчĕ.

1938 çулта Гуçĕв йултăша Вăрнар райĕçтăвком председательне суйлаççĕ. Ăна Вăрнар районĕнчи Хапăс суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте пĕр саслăн пулса, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Константин Иванăвич Иванов

Совет влаçĕ пулнă хыççăн, пирĕн çĕршывра искусствă аталанса пыма тытăнчĕ. Ку—чăн-чăн социалисăмла искусствă. Партипе правительстăвă искусствăна вăйлатса пыма, аталантарма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн Социалисăмла Совет республикĕнчи çынсемшĕн пултарулăх çулĕ уçă.

К. И. Иванов искусствăн çамрăк деятелĕ. Вăл хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвĕпе пултарулăхне форми йенчен нацилĕ, содержанийĕ социалисăмла культурăна вăйлатса пырас ĕçе парать.

Иванов йултăш 1911 çулта, Шупашкар районĕнчи Чăкăр йалĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Вăл совет влаçĕ пулнă хыççăн, совет шкулĕсенче вĕренсе пĕлӳ илнĕ. 1932 çулта Чăвашсен музыкăпа театр техникумĕнчен вĕренсе тухнă. 1932—1934 çулсенче вăл Чăвашсен Государствă Академи театрĕнче ĕçленĕ. Малтанхи вăхăтра артис пулнă, кайарахпа режиççор пулса ĕçленĕ.

1934 çулта Мускаври театр институтне вĕренме кĕнĕ, режиççор факультетĕнче вĕреннĕ.

Халĕхи вăхăтра Константин Иванăвич Чăвашсен Государствă Академи театрĕнче аслă режиççор тата театрăн директăрĕ пулса ĕçлет.

Иванов йултăш 1925 çултанпа Ленинла комсомол членĕ. Искусствă работникĕсен профсойуз членĕнче тăрать. Общĕствăлă ĕçсенчи активлă работник. Вĕренме кĕричченех пионер вожатăйĕ тата ПСÇЛКС йачейкин çекретарĕ пулса ĕçленĕ.

Иванов йултăш, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ пекех, çĕршыв интересĕсене парăнса ĕçлет, хăйĕн пĕтĕм çамрăк вăйне тата пултарулăхне социалисăмла тăван çĕршыври халăхсен ырă пурнăçĕшĕн пама тăрăшать.

Ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировка тума Карăк суйлав округĕнчи суйлав комиççи регистрациленĕ.

Артемий Иванов

Артемий Иванăвич Иванов йултăш 1889 çулхи октябĕрĕн 20-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кив-Тутайкасси йалĕнче, ватам хресчен çемйинче çуралнă. Вăл пуçламăш шкул пĕтернисĕр пуçне урăх вĕренеймен. Кулаксемпе пупсен пусмăрлă самани чăваш халăхĕн—чухăнпа ватам хресченсен ачисене шкулсенче вĕренме ирĕк паман. Пурнăç—вăл хăй те шкул. Пурнăç ăна чи кирлине, чи пахине — капиталисăма курайманлăха, ĕççыннисене, ĕççыннисен тăван çĕршывне йуратма вĕрентнĕ.

Çамрăк Артемий выльăса-кулса, йултăшĕсеме савăнса шкулта вĕренес вăхăтра уй-хирсем тăрăх кĕтӳ кĕтнĕ. Уйра кĕтӳре çӳресе хĕвелпе пиçнĕ хыççăн, вăл хăйсен йалĕнчи йултăшĕсемпе пĕрле Атăл çине матруса кайнă. Йăвăр йапаласем йăтнă. Çанçурăма вĕтнă вăл çамрăклах.

* * *

Граждăн вăрçи хыççăн Артемий Иванăвич пульăсем шăтарса пĕтернĕ шенелпе тăван йалне таврăнать. Киле килсен те лăпланса пурăнма çук. Артемий Иванăвич ку вăхăтра кулаксен агитацине хирĕç, халăх хуçалăхне йĕркелессишĕн, кооперативсем организацилес ĕçре, совет влаçĕшĕн, ирĕклĕ пурнăçшăн вăйа хурса ĕçлет.

Вăл хăйĕн пĕлӳлĕхне ӳстерсе пырать. Общĕствăлă ĕçсене йаланах активлăн хутшăнса тӳррĕн пурнăçласа пырать. 1934 çултанпа вăл Кив-Тутайкасси йалсовет председателĕнче ĕçлет. Вăл ĕçе йĕркелеме пĕлнипе йалсоветă пур хуçалăхла-политикăлă кампанисене ирттерес ĕçре те районра малти рете тухать. Колхозниксем колхозра пысăк тухăçлă тыра туса илеççĕ.

Ку таранччехи лайăх ĕçĕсене кура, Есмĕл суйлав округĕнчи суйлавçăсем Артемий Иванăвич Иванов йултăш кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă.

Артемий Иванов йултăш совет влаçĕшĕн, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçшăн паттăррăн кĕрешекен çын, вăл партире тăман большевик.

Федоçийă Йаковлевнă Çмирновă

1903 çул. Буржуазипе помешчиксен влаçĕ. Мăшкăл тӳссе пурăннă саманара çуралнă Федоçийă.

Федоçийă ашшĕ Йакку—ватам хресчен пулнă. Анчах йат çĕрĕсем йалтан инçетре чуллă вырăнсенче кăна пулнипе çĕртен тухăç сахал пулнă. Федоçийă ашшĕ чылай çулсем хушши Самарти çĕрулпучĕсем патĕнче хура тар йухтарса ĕçленĕ.

Ашшĕ Самартă тарçăра ĕçленине те, патша çарĕнче 6 çул хĕн-хур тӳснине те, Йапун вăрçинче пулнине те Федоçийă курман.

Август, çентябĕр уйăхĕсем... Тĕнчене хура пĕлĕт хупăрласа илнĕ. Аçта кичĕ унта тупăсем, снарйадсем таврана кисретсе çурăлнă. Çакăн пек кичем те хăрушă вăхăтра Федоçийă амăшĕ çумĕнче ĕсĕклесе тăван ашшĕне империалисăм вăрçине ăсатнă.

Çамрăк, 6 çулта çеç пулнă ун чухне Федоçийă. Ашшĕ камшăн, мĕншĕн вăрçма кайнине пĕлмен. Киле Федоçийăпа амăшĕ ним пĕлми макăрса йулнă.

* * *

Тĕнче вăрçи вăйлансах пынă. Вăрçăн вĕçĕ-хĕрри курăнман. Пур çĕре пырсан та халăх ăхлатса кульанни, „çавăн чухлĕ çын вилнĕ, аманнă" тенĕ хăрушă хыпар çеç сарăлнă. Халăх вăрçă чарăнасса кĕтнĕ. Киле йулнă ват старикĕсемпе карчăксем ывăлĕсемшĕн кульанса макăрнă. Федоçийă ӳссех пынă. 8 çула çитсен вăл йалти шкула вĕренме кĕнĕ. Вăл тăрăшса вĕреннĕ. Анчах та кĕл тума тата сăхсăхма вĕрентни Федоçийăн кăмăлне кайман.

* * *

Кĕркунне... 1917 çул. Октябĕрти революци. Çĕнĕ, тĕпренех çĕнĕ влаç — рабочисемпе хресченсен влаçĕ.

1919 çулта, пусмăр сăнчăрне йаланлăхах салса салатнă çĕршывра Федоçийă йалти шкулта вĕренсе тухать. Вĕренес, Ленин—Сталин партин шанчăклă хĕрĕ пулас шухăш Федоçийăна канăç паман. Вăл вĕренĕве малала тăсассишĕн чунтан тăрăшнă. Анчах килĕнче никам та ĕçлекен пулманни çамрăк Федоçийăн ĕмĕтне пурнăçлама чăрмантарнă. Унăн малала вĕренме май пулман.

1920—1928 çулсем хушшинче вăл амăшĕпе хăйсен хуçалăхĕнче ĕçлет.

1929 çулта Федоçийă Йакăвлĕвнă Çмирновă хăй çуралнă районах, Йелчĕк районĕнчи Вăрăм Хăва йалне качча тухать. Çакăнтан вара Çмирновă йултăш пурнăçĕн тепĕр тапхăрĕ пуçланать.

Çмирновă йултăш хĕрарăмсен организатăрĕ. Общĕствăлă ĕçсенче активлăн ĕçлет. Вăл пулас пурнăçа витĕр курса пĕлсе тăнă. Чухăн та асаплă пурнăçран пĕр колхозра çеç хăтăлма май пурри çинчен лайăх ăнланнă. Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, халăхсен лайăх та савăнăçлă пурнăçĕшĕн тăрăшни—Çмирновăна малашне ĕçлеме вăй панă. Вăл пуçарнипе 1930 çулта Вăрăм Хăва йалĕнче 8 хуçалăхран колхоз организациленĕ. Çак вăхăтра Çмирновăн колхоз тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçе пысăк вăй хумалла пулнă. Чăн та колхоза организацилеме хуçалăх йенчен тĕреклетессишĕн колхоза хирĕçле пыракан кулаксемпе карма çăварсемпе вирлĕн кĕрешнĕ вăл.

Çмирновă йултăш организациленĕ колхоз халь 8 киллĕ мар, унта ĕнтĕ 120 кил пĕрлешсе тăрать. Вăрăм Хăва çĕнелнĕ йал—колхозлă йал пулса тăчĕ.

Ленин: хут пĕлмен çын политикă тулашĕнче тăрать, тесе асăрхаттарса хăварнине Çмирновă йултăш асра тытса, 1931—1932 çулсенче хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе активлăн ĕçлет.

1932 çул Çмирновă йултăшăн ĕмĕр манми çул пулса тăнă. Çак çул Çмирновă йултăшăн иртнĕ вăхăтсенчи ĕçĕсене пăхса тухса хакланă. Ăна Ленин-Сталин парти ретне илнĕ. Çак вăхăтра вара Çмирновăн татах та хастарланса ĕçлес саранăçлă вăхăт пуçланнă.

1933 çулта Федоçийă Вăрăм Хăвара йалсоветĕнчи Ĕçлекенсемпе Хресченсен Инспекци çекцине йĕртсе пырать. Ку вăхăтра вăл партипе правительствăн кăтартăвĕсене пăсакансемпе хăйулăн та паттăрăн кĕрешнĕ.

Федоçийă Йакăвлĕвнă Çмирновă йултăша халăх шанать. 1934 çулта ăна Вăрăм Хăва йалсовет председательне суйлаççĕ. Çак вăхăтченех ĕнтĕ йалсовет председателĕнче ĕçлет. Партипе правительстăвă хушнă ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пырать. Çак вăхăтра вăл районри ытти йалсоветсене сахал мар лайăх примерсем кăтартнă. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна 1934—1935 çулсенче, республикри тырпул ăстаçисен слеçĕнче, 1936 çулта Пĕтĕм Сойузри Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн—11-ш çеç çинче пулма тивĕçлĕх панă. Тата темиçе хутчен те ăна хаклă премисем панă.

Çмирновă йултăш республикăра паллă йалсовет председателĕсенчен пĕри. Вăл массăпа çыхăнса, вăл çыхăнăва çирĕплетсе ĕçлесе пырать. Çавăнпа та ĕнтĕ Федоçийă Йакăвлĕвнă Çмирновă йултăш Йелчĕк районĕнчи Тайапа суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Ăна ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тайапа суйлав округ комиççинче регистрациленĕ.

Ĕнер Шупашкара пирвайхи пăравус çитрĕ

Епĕр хамăрăн телейлĕ çĕршывпа мухтанатпăр

Акă ĕнтĕ чукунçулăн реļсине Чăваш республикĕн тĕп хули патне сарса çитерни. Кайала çаврăнса пăхмала, иртнĕ ĕçсене аса илмеле, пуласси çинчен каламала.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул реļсине çамрăк, совет инженерĕ Чижов йулташ сĕннĕ çĕнĕ меслетпе сарса тухнă. Çак меслет строителствăра ĕçлекен пур работниксемшĕн те çĕнĕ пулнă. Çавăнпа та рабочисене çак меслетпе ĕçлеттериччен малтан, ăна тĕплĕн сăнаса вĕренмеле пулнă. Çакна шута илсе малтанах чукунçул реļсине инженер Чижов йулташ хăй йертсе пынипе командирсем—бригадирсемпе строймаçтăрсем сарнă. Çапла пуçăннă ĕнтĕ чукунçул реļсине çĕнĕ меслетпе хурас ĕç.

Иртнĕ кĕркунне реļсăсем сарас ĕç пуçланнă. Чукунçул реļсине сарнă çĕре республикăн тĕрлĕ районĕсенчен рабочисем килчĕç. Вĕсем тĕрлĕ проф ссийĕ пулнă, анчах вĕсен пĕр шухăш—чукунçул строителствинче ĕçлесе, ăна хăвăртрах Шупашкара çитересси пулнă.

Малтанхи вăхăтра вĕсем реļсă сарни çине тĕлĕнсе пăхнă. Вĕсене вĕренме курса йанă, курс хыççăн вĕсем ĕçре, реļсă сарнă чухне вĕренчĕç. Строймаçтăрсем, бригадирсем, участкă начаļникĕ Голубĕв йулташ йертсе пынипе, хăйсен пĕлĕвне çĕнĕрен килнĕ рабочисене пама, вĕсенчен специалиссем—чукунçул çинче ĕçлекенсем тума тăрăшрĕç. Çакна пула çав рабочисенчен нумайĕшĕ хăйсен кунçулне социалисăмлă державăн чукунçул транспăрчĕпе çыхăнтарчĕç.

Пур ĕçре те палăрнă комсомолĕцсен бригадин бригадирĕ Тарасăв, комсомолăн Тутаркас районĕнчи организацийĕ строителствана йанă Пушков йулташсем халĕ бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Комсомолĕц—бригадир Колбасăв йулташ та хăйĕн ĕçне пит лайăх туса пырат.

25 çын костыļщиксем пулса тăчĕç, вĕсем стахановла çĕнĕ нормăна тултарса пыраççĕ. Кудрйашов йулташ халĕ костыļа 4—5 хут çапса кĕртес вырăнне, иккĕ çапса кĕртет. Нормăпа 700 костыļ çапмала пулсан, Саļникăв йулташ 1180, Çеменăв йулташ 1070 костыļ çапат. Малтанхи вăхăтра нормăна аран-аран тултарнă пулсан, халĕ ĕнтĕ нумайĕшĕ 200 процент тата унтан та ытларах тултараççĕ. 650 метр çинче реļсăна нормă тăрăх пĕр сехет те 50 минутра сармала пулсан, сехет те 20 минутра сарса тухаççĕ.

Реļсă сарас ĕçре ĕçлекенсенчен Тарасăвпа Зайцĕв йулташсене „Ударник сталинского призыва" значокне панă. Тарасăв, Колбасăв, Йакăвлĕв, Саļникăв, Рубцовă йулташсене ССР Сойузĕн Çулйĕр Халăх Комиссарĕ премий панă. Нумайĕшне Чăваш АССР правителстви премиленĕ.

Паллах, ӳсĕмсене йăвăрлăхсемсĕр тăваймăн. Йăвăрлăхсем пулнă, вĕсене çĕнтерме тивнĕ.

Кĕркунне çăмăр, хĕлле сивĕ, çуркунне пылчăк пулнă пулин те епĕр хамăрăн участкăран пăрахса каймăн. Пире 45-ш километртa, Çĕлескер патĕнче, ĕçлени аса килет. Унта пылчăк чĕркуççи таран пулнă. Пăравус кашни кунах 7—8 хут реļсăран тухса кайнă. Епĕр çапах ĕçленĕ. Кĕпер фермисене хуни аса килет. Малтанах çав фермăсене хурасси çинчен шухăшлама та йăвăрччĕ, анчах çине тăрса тытăнсан, фермăна тĕрĕс тата кĕске срукра хутăмăр. Уйрăм бӳрократсен тата чиновниксен айăпĕпе пирĕн пата апат-çимĕç, таварсем, шыв, вут-шанкă вăхăтра илсе пыманнисем те пулнă. Анчах та вĕсем пирĕн хастарлăха, чукунçула хăвăрт туса пĕтерес хаваслăха çĕмĕрме пултараймарĕç. Йалтах урăхла, прогул тăвас мар тесе, рабочисем чылай вăхăт хушши килĕсенче пулман.

Строителствăра тĕл пулнă йăвăрлăхсем, ĕçе пĕлсе организациленĕ, строителства ĕçĕн графикне пăхăнса ĕçленĕ пулсан, пулман та пулĕччĕç. Епĕр Сталин йулташ чăн-чăн кадрсем йăвăрлăхран хăрамаççĕ, унран хăраса кайала чакмаççĕ, малала кайаççĕ, çĕнтерессĕ тенине асра тытса ĕçлесе, тĕл пулнă йăвăрлăхсене çĕнтерсе пытăмăр.

Ишлейрен инçех те мар, епĕр пăрахут сассине илтрĕмĕр. Ку ĕнтĕ Шупашкар çывăххине, Атăл çывăххине пĕлтерет. Çакăнпа савăнса епĕр ĕçе çĕнĕ вăйпа, хастарлăхпа тытăнтăмăр. Çавăн чухне вара епĕр пĕр кун хушшинче 1.400 метр реļсă сарма тытăнтăмăр. Епĕр 79 çын пĕрле ĕçленĕ. Пирĕн ĕçе хаклас пулсассăн график тăрăх 1950 метра 144 çын сармалине шута илес пулат. Пире материалсене (шпал, реļсă) вăхăтра илсе пырса панă пулсан, епĕр тата та пысăкрах çитĕнӳсем тума пултарнă.

Халĕ реļсăсене сарса пĕтернĕ. Анчах та ку ĕçĕн çурри çеç-ха. Пирĕн чукунçула йăлтах туса пĕтермеле, ун тăрăх пăссажирсене илсе çӳремеле. Епĕр халĕ çакăншăн тăрăшатпăр та. Пĕтĕм строителсене, Шупашкар, Ишлей, Çĕрпӳ, Трак, Шăхасан, Канаш, т. ыт. районсенчи колхозниксене хамăр пек ĕçлеме чĕнетпĕр.

Епĕр, чукунçул çинче ĕçлеме професси илнĕ рабочисем, çак чукунçул çинче йаланлăха ĕçлеме йулатпăр. Çавăнпа та епĕр Хусан чукунçулĕн управленинчен пире вĕренме йама, бригадирсем пулма, строймаçтăрсем пулма пулăшу пама ыйтатпăр. Епĕр чукунçула туса пĕтернипех лăпланмастпăр, ăна хамăрăн социалисăмла çĕршывăн тивĕçлĕ чаплă ĕçлекен çулĕ туса хума тăрăшатпăр.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче епĕр Совет Сойузĕнчи халăхсемпе пĕрле хамăрăн сассăмăрсене Сталин йулташăн тата унăн çывăх соратникĕсемшĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн паратпăр. Епĕр хамăрăн телейлĕ çĕршывпа мухтанатпăр, ăна çирĕплетессишĕн, унăн пуйанлăхне нумайлатассишĕн пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлетпĕр. Çавăнпа епĕр, пайан республикăри пĕтĕм ĕççыннисене чукунçул строителствинчи пур ĕçсене те августăн 1-мĕшне—правителства кăтартса панă срукра туса пĕтерсе, хута йарассишĕн кĕрешме чĕнетпĕр.

Строймаçтăрсем: Козлов, Кудисăв, Пуļахин,

Бригадирсем: Тарасăв, Пушков, Садов, Колбасăв.

Костыļщиксем: Зайцĕв, Саļникăв, Макçимăв, Селезнļов, Çеменăв, Дмитрийĕв, Тимофейĕв, Йакăвлĕв, Кутăшов, Йевдокимăв.

Болтовщицăсем: Рубцовă, Васийлĕвă.

Реļсă саракан: Федăрăв,

Ĕçе йышăнакан: Илдерков.

Плана ытлашшипех тултарса пытăмăр

Епĕ хамăн бригадăпа Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула хывнă çĕрте 3 уйăх ĕçлетĕп ĕнтĕ. Çак вăхăтра епĕр чукунçул хывас ĕçе аванах алла çавăрса илтĕмĕр. Ийунĕн 3-мĕш кунĕнче епĕр 4 плет çыхма ĕлкĕртĕмĕр. Ĕçре уйрăмăнах Шишакин, Цыпļайĕв, Волкăв тата Арçентйĕв йулташсем палăрса тăраççĕ. Ку таранччен вăл йулташсем сăлтавсăр ĕçе тухманни пĕрре те пулман. Çавна пула манăн бригадă кулленхи ĕç нормине йаланах 170—180-шер процент тултарса пырат.

Бригадăри йулташсем малала та чукунçул çинче ĕçлеме йуласшăн. Вĕсем пурте чукунçул çинчи квалификацилĕ работниксем пуласшăн.

Бригадир А. Салдыркин.

„Пур строителсене те хамăр пек ĕçлеме чĕнетпĕр"

Пăлаки Васийлĕвăна чукунçул строителствинче ĕçлекенсем аван пĕлеççĕ. Пăлаки ĕçе çинчен çулйĕр маçтăрĕ Козлов йулташ та хаваслансах каласа парат.

— Пăлаки Васийлĕвнă чукунçул строителствине 1937-мĕш çулта сентăбĕр уйăхĕнче килсе кĕчĕ. Килсенех Пăлакийе нумай пулăшмала пулчĕ. Кайарахпа ĕçе хăнăхрĕ, вĕренчĕ, стахановла ĕçлеме пуçларĕ. Ĕçе чĕререн йуратса тăват. Хĕлле, шартлама сивĕ вăхăтĕнче те, Пăлаки ĕçе пăрахмарĕ, вăл Христинă Рубцовăпа ăмăртса, реļсăсене сарас ĕçре ĕçлерĕ.

Пăлаки Васийлĕвнă ĕнер питех те савăнăçлă кăмăллă.

— Шупашкара реļсăсене сарса çитеретпĕр, пайан пĕтĕм Чăваш халăхĕн пысăк савăнăçĕ, епĕ хам та савăнатăп,—ку сăмахсене Пăлаки чĕререн калат.

Чăвахăх та Пăлаки çак строителствăра çĕнĕ çын пулса тăчĕ. Чукунçул строителствине пыриччен Пăлаки Елĕкре ļаļкăра тата пекарļăра ĕçлесе пурăннă. Строителствăна пырса кĕрсенех, Пăлаки хушнă ĕçе тĕплĕн вĕренсе тума тытăнат. Çулйĕр маçтăрĕ Козлов йулташ ăна ку ĕçре пулăшат. Ĕçе хăвăхса пынă май Пăлаки обшчĕствăла-политикла ĕçе те активлăн хутшăнат. 1938 çулта март уйăхĕнче Пăлаки комсомол ретне кĕрет. Комсомол организаци ăна ĕçре тата вĕренӳре пулăшса пырат.

— Чукунçула туса пĕтерессишĕн чăваш халăхĕ тăрăшса ĕçлерĕ, епĕр реļсăсем сарса Шупашкара пынине пĕтĕм республика сăнаса пычĕ. Парти организаци стахановла ĕçлеме пур условисене те туса панă вăхăтра, стахановла ĕçлемесен май килмест. Çавăнпа та епĕр Христинăпа стахановла ĕçлетпĕр. Хамăрăн стахановла ĕçпе епĕр Ленин—Сталин партине чĕререн йуратнине кăтартасшăн. Хамăр пек ĕçлеме епĕр пур строителсене те чĕнетпĕр,—тет Пăлаки.

А. Сымокин.

Строителствăри ударник Г. Шарафутдинăв йулташ. Ăна „Сталинский призыв" значокне панă.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Чукунçул хывса Шупашкара çитнĕ

Чăваш ĕçхалăхĕ темиçе вуншар çул хушши Канашран Чăваш республикĕн тĕп хулине—Шупашкара чукунçул хывассине кĕтсе пурăннă. Пайан чăваш халăхĕн ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Чукунçул хывса Шупашкара çитерни. Канашран Шупашкара 100 километр ытла чукунçул хывса республика столицине Совет Сойузĕнчи ытти хуласемпе çыхăнтарнă.

Чукунçул хывас çĕрте ĕçленисенчен уйрăмăнах çак йулташсен ĕçĕсене паллă тумала: укладка начаļникĕ—Голубĕв, строймаçтăр Козлов, Кудисăв, бригадирсем—Тарасăв, Пуļахин, Садов, стахановĕцсем — Колбасăв, Пушков, Садикăв, Рубцовă, Васийлĕвă, Йерофейĕв машинис, çулмаçтăрĕ Йакимăв т. ыт. те.

Чукунçул хывса çитерни. Анчах куnпа ĕç пĕтмест-ха. Умра тата нумай ĕçсем. Çĕрпӳ, Шупашкар станцисенче тата Ишлейпе Трак районĕсенче станцă çурчĕсене тумала. Шупашкарта шыв илмели башļнă туса пĕтермеле. Тата 9 трупана тăпрапа витмеле. Пĕтĕм чукунçул линине хăйăр сапса çирĕплетни кирлĕ, кăна валļи 166 пин кубометр хăйăр турттармала. Станцăри площадкăсене тума 18 пин кубла метр тăпра кирлĕ. Темĕн чухлĕ ытти çуртсене тумала.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Канаш—Шупашкар чукунçул строителстви çинчен майăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленире уйрăм ĕçсене хăш вăхăтра туса пĕтермели срuксене палăртнă. Анчах çак ĕçсене кăтартнă вăхăта пурнăçлани курăнмаст-ха. Шупашкар станцине тума тытăнмали вăхăт иртнĕ пулин те, станцă çуртне тума халĕ те тытăнман.

Строителствăра ĕçлекенсен коллективĕ умĕнче пысăк ĕçсем тăраççĕ. Пĕтĕм ĕçе кĕске вăхăтра вĕçлесе çитермеле. Çакăншăн хытă ĕçлемеле строителствăри коллективăн. Ку ĕçре партипе совет тата обшчĕствăлă организацисен пулăшса пымала.

М. Куçмин,

М. Шабров.

Строителствăри ударник Н. Алексейĕв йулташ. Ăна „Почетному железнодорожнику" значокне парса парнеленĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Пирĕн умра пысăк ĕçсем тăраççĕ

Ĕнер Шупашкара пĕррĕмĕш паравус килчĕ. Вăл кун пирĕншĕн, чукунçул хывнă çĕрте ĕçлекен рабочисемшĕн, уйрăмăнах савăнăçлă кун пулса тăрат. Халĕ епĕр хамăр пысăк ĕç тунине хамăр куçпа куратпăр.

Чукунçул строителстви чăваш çĕршывне хуçалăх тата куļтурă тĕлĕшĕнчен ӳсме çав тери пысăк май парат.

Пире, строителствăна колхозран пынă çынсене, нумай вĕренмеле пулчĕ. Епĕр кашни кун хамăр пĕлĕве ӳстерсе пытăмăр. Çавăнпа пирĕн ĕç тухăçлăхĕ те ӳссе пычĕ. Йулашки вăхăтра бригадă нормăна 150—160 процент тултарса пычĕ.

Епе хам бригадир пулса ĕçлетĕп. Лайăх ĕçленипе стахановĕц-бригадир йатне илме тивĕçлĕ пултăм.

Реļсă хывас ĕç ĕнер пĕтрĕ ентĕ. Анчах кунпа чукунçул строителстви пĕтмен-ха. Пирĕн умра тата пысăк ĕçсем тăраççĕ. Пирĕн халĕ чукунçула йулашки хут тӳрлетсе, шпалсем айне хăйăр сарса тухмала. Ку ĕçе тума çынсем татах та нумай кирлĕ. Ку ĕçре сахалтан та виçĕ пин çын ĕçлес пулат. Çавăн пек ĕçлесен вара епĕр чукунçула августăн 1-мĕш тĕлне експлоатацине пама ĕлкĕретпĕр. Епĕ хам тата хамăн бригадăри рабочисем чукунçула августăн 1-мĕшне ĕçе йамала тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме сăмах паратпăр.

Бригадир Тарасăв.

Начар хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Майăн 30-мĕшĕнче районри йалсовет председателĕсемпе çекретарĕсен, округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççи членĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура 101 çын пулчĕç.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси районра мĕнле пыни çинчен райĕçтăвком председателĕ А. Филиппăв йулташ доклад туса пачĕ. Канашлура тухса каласакансем суйлава хатĕрленес ĕç çителĕксĕр саралса пынине, районра суйлав Положенисемпе Конституцисене вĕренес ĕç начар пынине палăртрĕç. Сăмахран, Атнаш, Высокăвка, Чул-камака йалсоветĕсенче суйлава начар хатĕрленеççĕ.

Чул-камака, Малти Антаваш суйлав участкисенче ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлана чухне уса курнă шырмăсене вăтса пĕтернĕ.

Суйлав участкисенче йĕркелĕ дежурства та çук-ха.

Н. Михайлăв.

Архив ĕçĕн çирĕм çулĕ

1918 çулти ийунĕн 1-мĕшĕнче Владимир Илйич Ленин „О реорганизации и централизации архивного дела" йатлă декрет çине алă пуснă. Çав декрет тăрăх, Октăберти социалисăмла аслă революцичченхи патша учрежденисемпе агенчĕсене, дворенсемпе çĕр улпучĕсен тата ыттисен архивĕсене пĕтерсе хунă. Вĕсем архивсене хăйсен йăх-тĕпри чина кăтартса пурăнма йе тата капитал çаврăнăçĕ мĕнле, мĕн чухлĕ пулнине ĕççыннисенчен пытарса тăма, хăйсен аллинче тытса усранă. Документсене архива усрама парсан, вĕсем ĕçхалăхне експлоатацилесе пысăк тупăш илни палăрасран хăранă пулнă. Архив ĕçĕ çинчен кăларнă декрет тăрăх, патша експлоататăрĕсен архивĕсене пурне те совет государствин пĕртеппĕр архив фондне панă.

В. И. Ленин çак декрета алă пуснăранпа кăçал çирĕм çул тулчĕ. Çак хушăра архив ĕçĕ нумай ӳссе çирĕпленчĕ. Хаļхи вăхăтра Совет Сойузĕнчи архив социалисăмла телейлĕ çĕршывăн историне вĕренме пулăшакан документлă база пулса тăрат. Тепĕр йенчен, архив материалĕсене пуçтарса, пролетариат органĕсен аллине пани социалисăмла çĕршыва сыхлас, совет власне çирĕплетес ĕçре тата халăх тăшманĕсене шыраса тупса çĕмĕрсе тăкас ĕçре пысăк пулăшу кӳме пултарчĕ.

Совет Сойузĕн архивĕсенче калама çук нумай тĕрлĕрен хаклă документсем усранаççĕ. Ленин архив пирки декрет кăларсан, пирвайхи вунă çул хушшинчех Мускаврипе Ленинградри тĕп архивсенче 36.259 архив фончĕ (фонд тесе, мĕнле те пулин пĕр учреждени йе предприйати тăрăх пухăннă архив докуменчĕсене калаççĕ), крайсемпе республиксен архивĕсенче 51.362 фонд шутланнă. Пайанхи куна архив фончĕсен шучĕ икĕ хут ӳснĕ. Çав фондсенчи архив докуменчĕсем содержани тĕлĕшпе пурте пирĕн социалисăмла çĕршыв историне, економикă саралса пынине, рабочи клас ӳссе çирĕпленнине, вăл ĕлĕк капиталиссемпе çапăçнине тата хресченсем çĕрулпучĕсемпе кĕрешнине кăтартакан свидетĕлсем. Çакăнсăр пуçне, Совет Сойузĕнчи тĕп архивсенче тата крайсемпе республикăсенчи архивсенче усранакан архив материалĕсем империалисăмла тата гражлăн вăрçисен, Октăберти социалисăмла аслă революцин историне кăтартаççĕ.

Ĕçхалăхсене тĕрлĕрен учрежденисенче, предприйатисемпе организацисенче ĕçлени çинчен тата Хĕрлĕ çар службинче пурăнни йе аслă шкулсемпе вăтам шкулсенче вĕреннисем çинчен справкăсемпе ĕненетерӳсем парас йенчен те архив пысăк вырăн йышăнса тăрат. Пирвайхи вунă çул хушшинчех Мускавпа Ленинградри тĕп архивсем хăйсен материалĕсем тăрăх тĕрлĕрен учрежденисемпе ĕççыннисене 103.846 справкă панă, крайсемпе республикăсенчи архив органĕсем—203.096 справкă панă. Справкăсем илесси çултан çул ӳссе пырат. Октăбĕр революцин малтанхи кунĕсенче патша тарçисене çапса салатнă чухне совет власĕ архив материалĕсемпе нумай уса курнă.

Архив органĕсен Сталинла Конституци пройектне пĕтĕм халăхпа сӳтсе-йавнă вăхăтри документсене, Совет Сойузĕн, РСФСР тата автономлă республикăсенчи Верховнăй Советсен депутачĕсене суйланă вăхăтри материалсене пĕтĕмĕшпе типтерлĕн усрамала. Архив клас кĕрешĕвĕн çивче участки пулса тăрат, çавăнпа архивра усранакан документсене халăх тăшманĕсен аллине лекесрен хытă сыхламала. Архив органĕсенче ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсем, Ленинпа Сталинăн боļшевикла партин чаплă ĕçне парăннă çынсем ĕçлемеле.

Октăберти социалисăмла революциччен Российăра архив материалĕсене пухса, вĕсене аслăлăхла вĕренсе тăракан архив органĕ пулман. Октăберти революци архивсене политикла çапăçу хĕçпăшалĕ вырăнне шутласа, вĕсене пролетарилĕ диктатурăн органĕсене пачĕ, вĕсен ĕçне калама çук чаплă вырăна лартрĕ. Партипе совет правителстви йертсе пынипе архив ĕçĕнче ĕçлекен кадрсене хатĕрлеме Мускавра историпе—архив институчĕ уçнă. Ӳнта тĕрлĕ республикăсенчен темиçе çĕр çын вĕренеççĕ. ПÇК(б)П Тĕп Комитечĕ 1929 çулти мартăн 29-мĕшĕнче йышăннă постановленипе парти архивĕ организациленĕ, Совет Сойузĕн Тĕп Архив тытăмĕ çумĕнчи институт архив ĕçĕнче ĕçлекен руководителсем, аслăлăх работникĕсем валļи тата архив ĕçĕн техникине вĕрентме кашни çулах курссем туса иртерет.

Пĕтĕм Российăри Тĕпĕçтăвкомăн 1922 çулти йанварĕн 30-мĕшĕнче йышăннă декречĕ тăрăх, кашни нацилĕ республикре архив органĕсем уçăлнă. Чăваш республикĕнче архив 1923 çулти февралĕн 1-мĕшĕнче пуçланса кайнă. Çак хушăра чăвашсен Тĕп Архивĕ калама çук пысăк çитĕнӳсем тума ĕлкĕрчĕ.

Хаļхи вăхăтра чăваш Тĕп Архивĕнче Октăбĕр революци хыççăнхи тата патша чухнехи учрежденисен архивĕсем 600 фонд ытла шутланаççĕ. Пĕтĕмĕшпе вĕсенче çур мĕлйун ĕççем усранаççĕ. Çак ĕççем хушшинче усранакан документсем пурте чăвашсем патша саманинче хĕнхурлăхра тата асаплăхра пурăннине, халĕ чăваш республикĕнче ӳссе çирĕпленнĕ социалисăм строителствине, чăваш çĕршывĕн производствăлă вăйĕсене сарассишĕн кĕрешнĕ çĕрти опытне тата чăвашсен хушшинче пулса иртнĕ революцилĕ йухăмсене çутатса паракан документсем пулса тăраççĕ. Кусемсĕр пуçне, халĕ районсенчи архивсенче те тĕрлĕрен учрежденисемпе йалсоветсен тата колхозсен архивĕсем 1018 фонд усранаççĕ. Вĕсем пурте йалхуçалăх ĕçне социалисăмла формăпа туса пынине, совет строителствин историне, ĕçхалăх куļтурă йенчен вăйлăн ӳссе пынине кăтартакан документсем.

Çавăнпа та архив материалĕсене кашни учреждение, предприйатинче, саватра, йалсоветра, колхоз йравленийĕнче тата кашни шкулта, институтра, техникумра йе ытти организацисенче типтерлĕн пăхса усрамала. Йалсоветсемпе колхозсем хăйсен архивĕсене харпăрхăй патĕнче виçĕ çул усрасан, районри учрежденисем — 5 çул усрасан архив материалĕсене районри архива усрама памала. Çак ĕçе пуринчен маларах кашни учителĕн, комсомолĕцăн, колхозсемпе йалсоветсенчи тата районсенчи руководителсен ытларах хак хумала. Архив материалĕсемпе епĕр Октăбĕр революци историне пĕлме, колхозсене мĕнле туни çинчен çамрăксене вĕрентме тата ытти тĕрлĕрен ĕçсенче усă курма пултаратпăр.

Йулашки вунă çул хушшинче Чăваш Тĕп архивĕ 10.499 ĕççыннине тĕрлĕрен справкăсем панă. Архив материалĕсем ӳснĕ çемĕн, архив докуменчĕсем тăрăх ĕççыннисене справкăсем парас ĕç те малала ӳссе пырат.

Кăçал чăвашсен архивĕ Тутар тата Мордва республикĕсенчи архивсемпе ăмăртса ĕçлет. Пуринчен ытла чăваш архивĕ кăçал аслăлăх ĕçне вăйлатса пыма пуçларĕ. Йулашки вăхăтра Чăваш республикĕн архивĕнче Совет Сойузĕн Çĕрĕç Комиссариачĕн представителĕ йалхуçалăх выставки валļи документсем ӳкерес тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Мускавран „Комсомольская правда" хаçат редакцинчен виçĕ представител ĕлĕкхи пурнăçа кăтартакан документсемпе паллашса кăрĕç, хаклăрах документсене редакци валļи ӳкерсе илчĕç. Нумайах пулмаст, Мордва республикĕнчи аслăлăхпа тĕпчев институчĕн представителĕ Улатăр çывăхĕнчи хресченсен 18-мĕш ĕмĕрти пурнăçне кăтартакан документсене ӳкерсе илсе карĕ. Архивра ĕçлекен работниксем, чăваш ĕçхалăхĕн ĕлĕкхи икĕ пусмăр айĕнчи асапла та хĕнхурлă пурнăçĕ çинчен час-часах хаçатсем çинче çырса пĕлтерсе тăраççĕ. Халĕ аслăлăх работникĕсем чăваш халăхĕн историне кăтартакан документсен сборникĕ валļи материалсене вĕренме пуçланă.

Чăваш архив бӳджечĕ те çултан çул ӳссе пырат. Йулашки пилĕк çул хушшинчех бӳджет тăвата хут ытларах ӳснĕ. Чăваш архивĕнче халĕ Мускаври Историле-Архив институтĕнче вĕренсе тухнисем икĕ çын, Мускаври, Горькинчи тата Хусанти архив курçĕсенчен вĕренсе килнисем тăвата çын ĕçлеççĕ. Районри архив работникĕсене кашни çул пекех чăвашсен Тĕп Архив çумĕнчи пĕр уйăхлăх курсра вĕрентнĕ.

Пирĕн Чăваш республикĕнче 627 йалсовет, 1725 колхоз, 500 предприйати, 5 совхоз, 11 машинăпа трактăр станци, 1014 çĕрте сутуилӳ тăвакан магазинсемпе ларьоксем, 11 вăрманпромхоз, аслă шкулсем тата техникумсем нумай шутланаççĕ. Вĕсемсĕр пуçне, районсенче тата хуласенче тĕрлĕрен учрежденисем нумай. Вĕсенче кашнинчех архив материалĕсем пур. Вĕсем хушшинче историпе аслăлăх тата политикă тĕлĕшĕнчен хаклă документсем пит нумай. Çав учрежденисен, йалсоветсемпе колхозсен тата ытти предприйатисемпе организацисен хăйсен архивĕсене лайăх йĕркелес пулат. Архив органĕсен çав ĕçре вĕсене активлăн пулăшса пымала.

П. Йермолайĕв.

Испанири пăлхавçăсен тылĕнче

Франко генерала хирĕçле восстанисем тата загăвăрсем

Наварра—Испанири облăçсенчен пĕри—мĕн йулăшки вăхăтченех фашисла пăлхавçăсен çирĕп шанчăкĕ шутланнă. Çав облăç ĕнтĕ халĕхи вăхăтра Франко генерала тата унăн хуçисене — Германипе Итали фашисĕсене хыттăнах шиклентерсе тăрат.

Сăмахран, çак çулхи март уйăхĕнче Навваррăра Франкопа интервентсене хирĕç тунă пысăк загăвара тупса палăртнă. Загăвăрта фашиссен „испанская фаланга" текен организаци членĕсем, Франкопа килĕшменскерсем, унăн Германи тата Итали интервенчĕсемпе сойуз тумали политикипе килĕшменскерсем, тăпă Загăвăра тупса палăртнă. Загăвăра йертсе пыраканĕсене тата „испанская фаланга" организацин 200 членне тытса арĕслесе, вĕсене Сан—Кристобаль крепăçне хупса лартнă, унччен те унта 800 çынна, пуринчен ытла басксемпе астурийĕçсене хупса усрана. Хупса лартнисем çав тери начар условисенче, крепăçĕн çĕр айĕнчи казамачĕсенче пуранаççĕ.

Майăн 22-мĕшĕнче арĕсленисем хăйула ĕç тунă. Вĕсем, вырăнти халăхсем пулăшнипе, охрана çине тапăннă та крепăçрен тухса тарнă.

Восстани тăвакансенчен пĕтĕмĕшлĕ хисепĕнчен—85 çынна пăлхавçăсем тытнă пулнă, 800 çынна йахăн Франци территорине каçса тарнă. Ыттисем, пăлхавçăсем тытса илнĕ провинцисенчи халăхсене интервентсене хирĕç çĕклес шутпа, Испанирех йулма шутланă.

Çав восстанипе пĕр вăхăтрах ытти вырăнсенче (Естремадурăра, Сарагоссăра, Сан—Себастйанра тата урăх вырăнсенче те) Испанири фашиссен ушкăнĕсемпе Итали жандармерийĕ хушшинче хĕçпăшаллă çапăçусем пулса иртнĕ.

Пăлхавçăсен лагĕрĕнчи харкашу мĕн пăлхав пуçланнăранпах пырат ĕнтĕ. Чи малтанхи вăхăтра фашиссен тĕрлĕ ушкăнĕсем хушшинче пысăк вырăнсене кĕрсе ларассишĕн, çара хăйсен аллине çавăрса илессишĕн кĕрешӳ пынă. Халĕхи вăхăтра вĕсен хирĕçĕвĕ интервентсем — оккупантсем пирки пулса пырат.

Çав событисем интервентсен лагĕрĕнчи лару-тăру хыттăн начарланса пыни çинчен кăтартса параççĕ. Республикă çарĕ çине тăрса хыттăн вăрçни массăсем фашиссен йунлă та пусмăрлă йеркипе тата Испани çĕршывĕнче италйанцăсемпе Германи çыннисем пӳтсĕрленсе, хăйсене хуçа пек тыткаланипе килĕшменнипе, унăн çине тарăхнипе вăйлăлатат. Интервентсене хирĕç Испанири фашиссен офицерĕсен хăшпĕр сийĕсем те тăраççĕ, мĕншĕн тесен интервентсем вĕсем умĕнчех хăйсем çарпа вăйпа тытса илнĕ территорисенчен мĕн пуррине пурне те туртса тăраççĕ. Çĕршыва çаратмалипех çаратаççĕ.

Халăхсен килĕшменлĕхĕ тата пăлханăвĕ йулашки вăхăтра Испани пăлхавçăсем тытса илнĕ пайĕсенче вырăх пуçпулса тăнипе те пулса пырат.

Çав событисем пурте пăлхавçăсен тылĕ арканассин пуçламĕшне çеç пулса тăраççĕ.

Республикă çарĕ: „пăйан хирĕç тăрас та, ыран наступлени тăвас" текен лозунгпа вăрçат, республикă çарĕ мĕн тери çирĕпленсе пырат, пăлхавçăсемпе интервентсен тылĕнчи аркану çавăн чухлĕ вăйланса пырат.

Германи генеральнăй штабĕн органĕ „Дейче Вер" нумайах пулмаст ирĕксĕрех çакăн пек йышăнна: республиканецсем кĕтмен хушăран хирĕç тăни „Франкон пур планĕсене те арпаштарса йачĕ" тата халĕхи вăхăтра интервентсен çарĕ „йăлтах вăйсăрланса вăрçайми пулчĕ".

(ТАСС).

Англи çар флотĕн тинĕс çинчи вĕренĕвĕсем
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çар судни çинче.

(Союзфото).

Учителсем умĕнче тăракан ĕçсем

Чăваш республикĕнчи пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчи учителсенчен çитмĕлпиллĕк проценчĕ—6210 çынран 4661 çын аттестаци витĕр тухрĕç. Хăйсенчен мĕн ыйтма тивĕçлине пĕтĕмпех пама пултаракан чăн чăн учителсен йатне илесси пирки пулса иртекен ĕçĕн итогĕ халĕ ĕнтĕ чылайах вывăдсем тума май парат.

Учителсен аттестацийĕн итогне пăхса тухнă чух, çителĕклĕ пĕлӳлĕхсĕр учителсен йышĕ пысăкки палăрат. Вĕсене халĕ учител йатне пама çук-ха, анчах çитес темиçе çул хушшинче уйрăмăн палăртнă испытанисене тытма асăрхаттарса хăварса, педагогикă ĕçĕнче ĕçлеме ирĕк пана.

Аттестаци витĕр тухнă 4661 учителрен учител йатне илеймемнисем 2050 çын шутланаççĕ, урăхла каласан, 43,9 проц. Учител йатне панисем пĕтĕмпе 1620 çын (34,7 проц.), ыттисене вара шкул ĕçĕсенчен хăтарнă.

Çав цифăрсем çакна кăтартаççĕ: Чăваш АССР-ĕнчи 1000 учителĕн харпăрхăй ĕçĕн уйрăмлăхĕсене кура, педагогикă училищин, учителсен йе педагогикă институчĕн курсне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тухса, екзамĕн памала. Çапла вара, кĕске срукрах 1000 учителĕн квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттермеле.

Çак ĕçсене правителства 1941 çулччен туса пĕтерме палăртрĕ. Çавăнпа та вĕренме тивĕçлĕ учителсен халех вĕренӳ ĕçне тытăнмала. Халех кашни учителе шута илсе, йăна уйрăм педагогикă шкулĕ çумне çирĕплетмеле, курса хăй вăхăтĕнче пĕтерме май паракан кирлĕ условисене туса памала; чи кирлĕ учебниксене те обйазателнă тупса памала; вĕренӳ ĕçĕн уйрăм режимне йĕркелемеле; кашни учител вĕренӳне йеппе пурнăçласа пынине уйрăмах сăнама контроль организацилемеле.

Кунсăр пуçне 1938—39 вĕренӳ çулĕнче пирвайхи хут туллимар вăтам шкул ĕçне пуçăнакан тата пуçламĕш шкултан туллимар вăтам шкула ĕçлеме куçакан учителсене хатĕрлес тĕлĕшпе те кĕске срукла курссем организацилемеле пулат.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн аттестаци комиççийĕ тунă вывăдсем чылай учителсемшĕн ытларах тăрăшма кирли çинчен çирĕплетсе параççĕ. Учителсен кадрне кирлĕ таран хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе пысăк тимлĕхпе ĕçлеме тытăнмала та ĕнтĕ.

И. Сапожников.

Спорт—Мускавра

Платон Ипполитăв
Спортăн тава тивĕçлĕ маçтăрĕ

Халĕхи вăхăтра Мускавра физкультурниксем вуншар пин çын, физкультурă вăйисене куракансем мĕлйуншар çын шутланаççĕ. Халĕ Мускавра 54 стадион, спорт площадкисем 200, 70 футбол уйĕсем, 50 çăмăл атлетикă, çулĕсем, 150 чушкă (городки) вăййин площадкисем, 90 гимнастикă залĕсем, 400 патне теннис корчесем, 500 валейбол тата баскетбол площадкисем, бокс занятийĕсене ирттермели, кĕрешмелли тата кире пуканĕсемпе выляммали вуншар залсем, хĕллехи 2 бассейн, 9 шыв станци, парусла икшер станцилĕ шыв-мотор клубĕ, 1 велотрек, ачасен пĕр стадионĕ, вăйăсем выляммали ачасен 26 площадки, 39 йĕлтĕр станци, 54 каток, культурăпа канун 14 паркĕнче спорт площадкисем пур...

Столицăри 15 пысăк стадион трибунĕсем 200 пин çынна вырнаçтарма пултараççĕ.

Измайлăвăра Сталин йачĕпе тăракан 120 пин çын вырнаçмалăх çĕнĕ стадион тăваççĕ.

Сталинла генеральнăй план тăрăх çĕнетсе йусанă хыççăн, Мускавра спорта йуратакансене валли ларса курмали мĕлйун вырăн пулат.

Ленинград çулĕпе йунашар, Петровск паркĕнчи çĕр çулхи çăка йывăç çумĕсемпе чаплă „Динамо" стадионĕ сарăлса выртат. 1934 çулта тĕп уйне çĕнетсе йусанă тата трибунăна туса çитернĕ хыççăн ку стадион 90 пин çынна вырнаçтаракан пулнă, стадиона карта тытнин тăршшĕ 3 километра çитнĕ.

Варринчи чаплă трибунăсемсĕр, ССР Союзĕнчи чаплă футбол уйĕсĕр тата çăмăл атлетикă йенĕпе чупмали çулсăр пуçне, спортăн „Динамо" комбинатĕнче спортăн тĕрлĕрен вăййисем валли пысăкмар стадионсем чылай пур.

Варринче—кино театр, ресторан, 200 çын вырнаçмалăх общежити, гимнастикă залĕ тата ытти залсем, унтах пур йенчен те лайăх хатĕрлесе çитернĕ врач кабинетне вырнаçтарнă.

Кăçал комбинат территоринче пысăк парк тăваççĕ.

1938 çулта футбол йенĕпе ССР Союзĕнче пĕрмĕш вырана тухассишĕн тата çĕршывăн кубокне илессишĕн 60 матч-тĕлпулу туса ирттерме палăртнă. Çак матчсенче 3 мĕлйун çын (трибунă нагрузкине 50 процент çеç шутласан) пулаççĕ.

Ленинградски шоссейĕн тепĕр йенче столицăн ачасен стадионĕ—„çамрăк пионерсен" стадионĕ вырнаçнă, вăл 7 гектар çурă вырăн йышăнат. Ку стадионта футбол уйĕсем—2, çăмăл атлетикă çулĕсем—2, тĕрлĕрен спорт площадкисем—18, кортсем массăлă вăйăсен вырăнĕсем те пур.

20 спортсмен-педагогсем 12—17 çулхи талантлă 1500 физкультурниксемпе вĕренӳ занятийĕсем туса ирттереççĕ.

Стадионăн çулталăкри бюджечĕ 1.200.000 тенкĕ.

Ир пуçласа сĕм каç пуличченех хавасла пурнăç кĕрлет кунта,—площадкăсем ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 9—10 сехетчен уçă.

Совет пионерĕсем патне, çĕршыв вĕсене парнелесе панă чаплă стадиона хăнана пырсан, çитĕннĕ физкультурниксем те хăйсене питлайăх туйаççĕ.

Ĕлекхи спорт маçтăрĕсене, революциччен Мускаври стадионсене халĕхи çакăн пек пуйанлăхпа танлаштарсан, вĕсем ытла та начар пулнăн куранаççĕ. Спорт вырăнĕсем (футбол уйĕ таврала ларmalисем тата çулсем) ун чухне 10 15 пин çынран ытла вырнаçтарма пултарайман. Курма пыракансем те нумай пулман. Паллă командăсем тĕл пулса выляна чухне те 2—3 пин çын кăна пуханнă.

Халĕ Мускавра çулахи спорта хĕрсех хатĕрленеççĕ. Çĕршĕр стадионсемпе площадкăсенчен вуншар пин физкультурниксем хатĕрленеççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

СУККĂРСЕНЕ ВĔРЕНТМЕЛИ

Улатăрти туллимар вăтам шкул

ВЕРЕНЕКЕНСЕНЕ ЙЫШĂНАТ

Шкула Чăваш республикĕнче пурăнакан суккăр ачасене 8 çулхисенчен пуçласа 11 çулхисем таран йышăнаççĕ. Туллимар вăтам шкул программи тăрăх вĕреннисĕр пуçне ачасене тата ытти ĕçсене, музыкăна вĕрентеççĕ.

Вĕренме йышăннă ачасене тăрантараççĕ, тумлантараççĕ общежитисенче усраççĕ тата ыт. йенчен те пулăшаççĕ. Вĕренме кĕме çак документсем кирлĕ:

Зайавлени, миçе çулхине кăтартакан справкă (метрикă хучĕ) сывлăх пирки тата куç мĕнле курнине йе пачах курманнине кăтартакан тухтăртан илнĕ справкă.

10 проценттан ытларах куракансене суккăрсен шкулне йышăнмаççĕ.

Зайавленисене документсемпе пĕрле çак адрĕспе йамала:
гор. Алатырь, Чуварлейский бор, Республиканская школа слепых.

Зайавленисене ийунĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа августăн 25-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Занятисем 1938 çулхи çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

3—2 ДИРЕКЦИ.

Чăвашсен Государствăн Çĕрпӳри ФЕЛЬДШЕРСЕН ШКУЛĔ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче фельдшерсен уйрăмне 1-мĕш курса вĕренекенсене илет

Вĕренмели срук 3 çул. Пуп граждăнсем те 19 çулхисенчен 35 çулхисем таран, малтан вăтам шкулта 7 клас программи чухлĕрен кайа мар пĕлӳ илнисем ку шкула вĕренме кĕме пултараççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 1-мешĕнчен 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Вĕренме илнисене стипенди пар ççĕ, общежити пур.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак докумĕнтсемпе пĕрле йамала:

Хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă,
Малтан вĕренни çинчен справкă;
Сывлăх пирки справкă;
Икĕ фото-картăчкă (аллусса çирĕплеттермеле);
Çар тивĕçлĕхне кăтартакан справкă;
Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Кирлĕ докумĕнтсене пурне те тăратмасан, зайавленийе пăхмаççĕ, чĕнмесĕр испытание пырсан, испытание тăратмаççĕ.

Фельдшерсен шкулне вĕренме кĕрекенсене туллимар вăтам шкул программи тăрах испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхипе, физикăпа, математикăпа, литературă, политграматă тата географипе.

7 çуллă, 10 çуллă шкулсене, техникумсене, медицинă вăтам шкулĕсене, рабфак пĕтернисене, вĕсем отличнă паллăсемпе вĕренсе тухнă пулсан, испытанисĕрех илеççĕ.

Испытани тытнисене августăн 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен студентсен шутне кĕртеççĕ. Занятисем çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адрĕсĕ: ЧАССР, г. Цивильск, Б. Советская ул. д. № 60.

2—2 ДИРЕКЦИ

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн СЕНТĔРВĂРРИНЧИ ÇĔРЙĔРКЕЛӲПЕ МЕЛИОРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

Гидротехнический тата çĕрйĕркелӳ уйрăмĕсен I-мĕш курсне студентсене илет

ГИДРОТЕХНИЧЕСКИ уйрăм çаксене вĕрентсе хатĕрлет: гидротехникăла строителствăсенче ĕçлекен техниксене, шывлă-шурлăхлă вырăнсене типĕтес, шăварас тата искуственнăй майпа çăмăр çутарас тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене. Социализмлă йалхуçалăхне валли шыв пăрки (водопровод) хывас тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене.

Çĕрйĕркелӳ уйрăмĕ вĕрентсе хатĕрлет: геодезилĕ ĕçсене лайăх пĕлекен, МТС-сен, совхозсен тата колхозсен çĕр участкисене палăртса пама пĕлекен тата пусуçавăрнăш проектне тума пĕлекен çĕрйĕркелекенсене.

Вĕренмели срук 4 çул. 15 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Испытанисем августăн 9-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен çак предметсемпе пулаççĕ: 1) вырăс чĕлхи тата литературă, 2) математикă, 3) географи, 4) физикă, 5) ССР Союзĕн Конституцийĕ.

1938 çулта туллимар вăтам шкулсенчен çӳлте кăтартнă предметсемпе отличнă вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Зайавленисене çак адрĕспе йамала:
г. Марпосад, ЧАССР, Техникум землеустройства и мелиорации.

Пĕрле çак документсем кирлĕ: а) туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен свидетелствă (подлинник), б) сывлăх пирки справкă, в) хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă, г) икĕ фотокартăчкă (çарапуçăн ӳкерттерсе, кашнин çине аллусса пĕр-пĕр учрежденире çирĕплеттермеле), д) çар тивĕçлĕхне кăтартакан документ.

Вĕренме илнисене пурне те стипенди параççĕ тата общежити пулат.

3—2 ДИРЕКЦИ.

„СПОТАРА"

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ кантурĕ

колхозниксенчен тата уйрăм кустарсенчен

Чăпта сутăн илет,

çавнашкалах хăйне валли 53×80 сантиметр виселлĕ чăпта çапса памала условисемпе

курăс-мунчала парат.

Тĕплĕнрех пĕлес пулсан çак адрĕспе ыйтмала: г. Чебоксары, Красноармейская, № 5.

2—1

Чăваш республикĕнчи армансен трестне

Асла економист-плановик

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрĕс: Шупашкар, Урицкий урамĕ, 13. „Мельтрест", управляйушчи патне.

3—3

Гастроль артисĕсене 10 кунлăха хватер валли УЙРĂМ ПӲЛĔМ

ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ

Çак адрĕспе пĕлтермеле: улица Герцена, 9, Филармония. Телефон № 1—71, до 3 ч. 30 м. дня.

ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти „Кожупряжь" ертелне

Бухгалтĕр (материаллă пайа) 1
Бухгалтĕр (расчот пайне) 1
Бухгалтĕр (атă пушмак производстви пайне) 1
Бухгалтĕр помошникĕ 1
Хуралçăсем тата уборщицăсем

КИРЛĔ

Занятие вăхăтĕнче ыйтса пĕлмеле, улица Ленина, дом № 6.

Правлени.

3—3

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне

економист статистик, бухгалтĕр помошникĕ, каççир, счетовод кирлĕ

Адрĕс: Чебоксары, ул. К.-Маркса.

Пайан театрсенче клубсенче. сатсенче:

Пайан кино-театрта	Саслă, çĕнĕ, кино-драмă „КОМСОМОЛЬСК"

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ ФИЛАРМОНИЙĔ

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕнче Украинăн музыкăлă драмипе комедийĕсен спектаклĕсем пулаççĕ.

ИЙУНĔН 5-МĔШĔНЧЕ малтанхи спектакль:

„Ой не ходи Грицию тай на вечерници"

5 пайлă музыкăлă драмă

ИЙУНĔН 6-МĔШĔНЧЕ

„Майская ночь"

4 пайлă музыкăлă драмă.

Билетсем театр кассинче кашни кунах 3 сехетрен 9 сехетчен сутаççĕ. Зайавкăсене телефон тăрăх пама йурат. Коллективлă курма билетсене заказчик патне леççе параççĕ.

Госфилармони дирекцийĕ.

Йалхуçалăх банкĕн Чăваш республикĕнчи кантурне ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ Машинисткă-секретар кирлĕ

Условисемпе паллашма Йалхуçалăх банкне пымала.

2—1

Хусанти М. Горький йачĕпе тăракан Коммуналă строителствă ИНЖЕНЕРĔСЕН ИНСТИТУЧĔ

(Казань, ул. К. Маркса, 68).

1938 çулта пĕрремĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Институт аплă профессилĕ инженер-строителсене хатĕрлет.

Специальнăй факультетсем: граждăнла, промышленнăç тăрăх тата хулари çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекен инженер-строителсем.

Вĕренме 17 çултан пуçласа 35 çула çитнисене, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ. Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Зайавленипе пĕрле автобиографи, вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестатăн подлинникĕ, сывлăх пирки свидетелствă тата çара пуçăн ӳкернĕ висĕ фотокартăчкă кирлĕ. Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Испытанисем августăн 1-мĕшпе 20-мĕш хушшинче çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхипе, математикăпа, физикăпа, химипе, политграмăтăпа, рисованипе, черченипе тата йутçĕршыв чĕлхипе. Испытанире ыйтакан предметсем тăрăх ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа консультацисем организацилеççĕ.

Испытание килнисем валли общежити тата столовăй пулат. Вĕренме кĕмели условисене Институтăн вĕренӳ пайĕнче кашни кунах кăнтăрла 1 сехетрен 4 сехетчен ыйтса пĕлме пулат.

Çав вăхăтрах институт çумĕнчи заочнă вĕренмели уйрăма та асăннă специальноçсене хатĕрлекен факультетсене çав условисемпех илеççĕ.

Заочнă вĕренмели уйрăмра тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ, кĕрес текенсен çулĕсене пăхмаççĕ.

Адрĕс: Казань, ул. К. Маркса, 68, Институт инженеров Коммунального строительства им. М. Горького.

ДИРЕКЦИ.

2—2

„КАПКĂН"

ЖУРНАЛ МАЛАШНЕ

(ийуньрен пуçласа) уйăхра

икшер хут тухма пуçлат

ХАКĔ ÇАВĂХ:
уйăха—40 пус; çурçула 2 т. те 40 п.; çулталăка 4 т. 80 пус.

„КАПКĂН" журнал редакци.

3—2

Чăвашвăрманпромсойуз

системинчи производствăла предприйатисенче—районсенче ĕçлеме

аслă бухгалтĕрсем, бухгалтĕрсем тата счетоводсем

КИРЛĔ

Зайавленисене почтăпа йама йурат, пĕрле ĕç спискин копине йе малтан ăçта ĕçленине кăтартакан документ йамала.

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, 7 Чувашлеспромсоюз. Сектор учета.

Президиум.

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

малтан ĕçлесе пурăннă рабочисен, инженерла техникла работниксен тата служащисен ГОСУДАРСТВĂ ЗАЙОМĔСЕН ОБЛИГАЦИЙĔСЕНЕ илме пыма чĕнеççĕ. Облигацисене алла илмели срук кăçалхи ийунĕн 1-мĕшĕччен. Ку срук иртсен облигацисене перекет кассине параççĕ.

3—2

Хваттерсем кирлĕ

хак килĕшӳ тăрăх

Çак адрĕспе пĕлтермеле: улица Карла Маркса, 32а, Союзкинохроника. Телефон № 3—12.

3—3

Уполномоченный Чувашглавлита № 279
5

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 500.